ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1956 çул
Февраль
23
КĔÇНЕРНИКУН
№ 40 (9719)
Хакĕ 20 пус.
38-мĕш çул тухать.

Паян—Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн Кунĕ.

Сывă пултăр пирĕн хăватлă Советлă Тăван çĕршыв!

Сывă пулччăр паттăр совет халăхĕпе унăн мухтавлă Хĕçпăшаллă Вăйĕсем!

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН XX СЪЕЗЧĔ

СЪЕЗД ДНЕВНИКĔ

Февралĕн 21-мĕшĕнчи касçи лару

Февралĕн 21-мĕшĕнчи касçи ларăва **Е. А. Фурцева** юлташ председатель пулса ертсе пынă. ССР Союзĕн халăх хуçалăхне 1956—1960 çулсенче аталантармалли улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе КПСС XX съезчĕ паракан Директивăсем çинчен Н. А. Булганин юлташ тунă доклад тăрăх прени пуçланнă.

Чи малтан **М. А. Яснов** юлташ (РСФСР) тухса каланă. Н. С. Хрущевпа Н. А. Булганин доклачĕсенче, тенĕ вăл, пирĕн парти улттăмĕш пилĕкçуллăхра халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене малалла аталантăрас тĕлĕшпе кăларса тăратакан питĕ пысăк задачăсем çинчен тĕплĕн те уççăн каласа панă. Мирлĕ строительствăн палăртса хунă программине пурнăçлани пирĕн çĕршывăн индустри хăватне малалла ӳстерме, ялхуçалăхне хăвăрт вăйлатма тата совĕт халăхĕн пурнăçне татах та ытларах лайăхлатма май парать.

Яснов юлташ улттăмĕш пилĕкçуллăхра Россия Федерацийĕн халăх хуçалăхĕ мĕнле аталанса пырасси çинчен калакан данăйсене илсе кăтартать. Промышленность производстви 1,7 хут ӳсет. Çĕпĕрти промышленность чĕртаварĕсен çав тери пысăк ресурсĕсемпе халăх хуçалăхĕнче усă курма пуçласçĕ. Ситес вунă çул хушшинче Çĕпĕр пирĕн çĕршывăн çĕр кăмрăкĕ кăлармалли тата электроэнерги туса кăлармалли питĕ пысăк бази пулса тăмалла. Пилĕкçуллăх вĕçĕ тĕлне пĕтĕм Союзра туса кăларакан çĕр мамăк пир-авăрĕн 78 процентне, атăпушмакăн 60 процентне, аш-какайăн 55 процентне, выльăх çăвĕн тата ытти сĕт-су продукчĕсен 59 процентне Россия Федерацийĕн промышленноçĕ парса тăмалла пулать.

Директивăсен проектĕнче ССР Союзĕнчи колхозсемпе совхозсенче çĕрĕçпе выльăхчĕрлĕх ĕрчетес ĕçе нумай вăйлатма палăртнă. Россия Федерацийĕнче тĕштырă культурисем акса тăвакан çĕр лаптăкĕсем 10 миллион гектартан кая мар ӳсесçĕ. Колхозсемпе совхозсенче шутлаза пăхнă тăрăх, аш-какай туса илес тĕлĕшпе пилĕкçуллăх заданине 1958 çултах пурнăçлама пулать.

— Кириченко юлташ,—тенĕ оратор,—Россия Федерацийĕпе Украина ССР-ĕ хушшинче тата пирĕн республикăсенчи облассем хушшинче социализмла ăмăрту пуçлама сĕнчĕ. Çак сĕнӳпе эпир пĕтĕмпех килĕшетпĕр. Ку ăмăрту, паллах ĕнтĕ, парти ялхуçалăхне малалла вăйлатас тĕлĕшпе лартнă задачăсене ăвăслă пурнăçлама пулăшĕ.

Н. Т. Мазуров юлташ (Белоруссии парторганизацийĕ) çапла каланă: пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе паракан Директивăсен проектĕнче партин тĕп çул-йĕрĕ—пирĕн çĕршывăн социализмла экономикине оборона хăвачĕн никĕсĕ пулса тăракан йывăр индустрие ытларах аталантармалли çул-йĕр—уççăн палăрса тăрать.

Çак пилĕкçуллăхра Белорус ССР-ĕнче промышленность туса кăларакан пĕтĕм продукци хисепне 1,7 хута яхăн ӳстерме палăртнă. Энергетикăна, машинăсем тата станоксем тăвакан промышленноçа пысăк хăвăртлăхсемпе аталантарма палăртса хунă. Промышленность продукцийĕ туса кăларасси, тĕпрен илсен, хальхи вăхăтри хăватсемпе лайăхрах усă курнипе, халĕ ĕçлекен предприятисене реконструкцилени, оборудованине модернизацилени, çĕнĕ техникăна ĕçе кĕртнипе тата технологи процесĕсене лайăхлатнипе ӳссе пымалла.

Малалла Мазуров юлташ Белоруссири Коммунистсен партийĕ ялхуçалăхне вăйлатас ĕç çине питĕ тимлĕ пăхни çинчен каланă. Республикăра колхозсене ертсе пырассине лайăхлатма кирлĕ мерăсем йышăннă. Актив шутĕнчен пиншер коммунистсене колхозсене ертсе пырас ĕçе янă; çавăн пекех нумай специалистсем колхозсене кайнă.

Унтан Мазуров юлташ Белоруссири ĕçсыннисем Директивăсен проектне хушу кĕртме сĕнни çинчен каланă. Сăмахран, вĕсем пилĕк çуллăх планра республикăри колхозсене электрификацилессине нумай ӳстермешкĕн палăртма сĕнессĕ.

Малалла **Н. И. Беляев** юлташа сăмах панă.

Хăйĕн сăмахĕнче вăл пуринчен ытларах ялхуçалăх ыйтăвĕсем çинчен каланă. Пирĕн çĕрĕç енĕпе пурнăçламалли тĕп задача вăл, тенĕ Беляев юлташ, КПСС Центральнăй Комитечĕн отчетлă докладĕнче кăтартса панă пек, çакăнта пулать: тырпул тухăçлăхне ӳстерни тата çĕнĕ çĕрсемпе малалла усă курнă никĕс çинче улттăмĕш пилĕкçуллăх вĕçĕ тĕлне çулсерене 11 миллиард пăт таран тĕштырă пухса кĕртмелле, техникăлла культурăсем акса тăвакан çĕр лаптăкĕсене чылай пысăклатмалла, çак культурăсен тухăçлăхне ӳстермелле, çĕрулмипе пахча çимĕç туса илессине нумай ӳстермелле.

Ялхуçалăх продукцийĕ туса илессине çапла нумай ӳстерме кирлĕ майсем пурте çителĕклĕ: пирĕн ялсенче хуçалăхăн социализмла форми пуçпулса тăрать, пирĕн МТС-сем нумай, ялхуçалăхне чи лайăх техника парса тăракан хăватлă социализмла промышленность пур, ялхуçалăхĕнче квалификациллĕ специалистсемпе организаторсем çĕршер пин çын ĕçлессĕ. Çаксем пурте ĕнтĕ улттăмĕш пилĕк çуллăх планăн ялхуçалăх тĕлĕшĕнчи заданийĕсене иртерех пурнăçлама та май параççĕ.

Халиччен сухаламан тата нумай вăхăт хушши сухаламасăр выртнă çĕрсемпе усă курас тĕлĕшпе туса ирттернĕ ĕç ялхуçалăхне вăйлатма пысăк майсем пуррине кăтартса парать. Юлашки икĕ çул хушшинче сухаласа тăкнă çĕнĕ çĕрсем çинче кăçал 33 миллион гектартан кая мар тырпул акассĕ.

Малалла Беляев юлташ тĕштырă туса илессине ӳстерес ĕçре резервсемпе усă курасси çинчен каланă. Наукăпа практика, сăмахран, çакна кăтартса пачĕç: тырпула çулса пултарса пухса кĕртни тырпул пухса кĕртмелли срокене кĕскетме, çапла вара тырă тăкăланса юлассине чылай чакарма май парать. Иртнĕ çул тĕштырăсен 25 процентне кăна çак меслетпе пухса кĕртнĕ пулсан та, кашни гектартан икшер центнер нумайрах тырă тухнă пулĕччĕ, эпир татах 350 миллион пăт тырă пухса кĕртнĕ пулăттăмăр. Çак меслете ĕçе анлăн кĕртсе пыма жаткăсемпе подборщиксем нумайрах туса кăларас пулать.

Кукуруза акса тăвакан çĕр лаптăкĕсене пысăклатас тĕлĕшпе тунă ĕçсен результачĕсем çинчен сăмах хускатса, оратор çак культура тухăçлăхне малалла ӳстермелли майсем çинчен каланă. Кукуруза тухăçлăхне ӳстерессипе пахă çăлкуçĕсенчен пĕри вăл гибридлă вăрлăхсен акна хăвăртрах тытăнниче пулать.

Хăйĕн сăмахĕнче Беляев юлташ ялхуçалăх наукин задачисем пирки чылай каланă. Пирĕн ученăйсем, пуринчен малтан экономист-аграрниксем, тенĕ Беляев юлташ, колхозсем, совхозсем тата МТС-сем малта тăни çинчен нумай çырчĕç, нумай калаçрĕç, анчах чи ялхуçалăх продукчĕсем туса илессине ӳстерес ĕçре çак пахă условине лайăхрах усă курмалла тăвас тĕлĕшпе сахал ĕçлерĕç. Экономика наукин задачи вăл малта пыракан колхозсемпе совхозсен пахă опытне пĕтĕçтересси, конкретлă предприятисен примерĕ тăрăх ялхуçалăх производствине лайăхрах йĕркелесе пыма пахă тĕслĕхсем кăтартса парасси пулать.

В. П. Елютин (Мускав) хăйĕн сăмахĕнче аслă шкулсем çинчен каланă. Улттăмĕш пилĕкçуллăхра аслă шкулсенчен вĕренсе тухакан специалистсен йышĕ пĕр хут çурă, йывăр промышленность, строительство, транспорт тата ялхуçалăх специальноçĕсем енĕпе вара икĕ хут ӳсмелле. Аслă шкулсене союзлă республикăсем тата çĕршывăн экономикăлла районĕсем тăрăх вырнаçтарса тухасси çинчен сăмах хускатса, Елютин юлташ çапла каланă: çĕнĕ пилĕкçуллăхра çĕршывăн хĕвелтухăç районĕсенче аслă шкулсем уçас ĕç çине питĕ тимлĕ пăхма палăртнă. Хальхи вăхăтра унта аслă шкулсем 200 ытла шутланаççĕ. Улттăмĕш пилĕкçуллăхра Новосибирскра, Иркутскра, Красноярскра, Хабаровскра, Сталинабадра, Акмолинскра тата ытти хуласенче çĕнĕ аслă шкулсем уçăлаççĕ.

Елютин юлташ çапла пĕлтернĕ: 1950 çулта пирĕн çĕршыври аслă шкулсем 36.000 инженер вĕрентсе кăларнă пулсан, 1956 çулта вара 71.200 инженер вĕрентсе кăларассĕ. 1950 çулта ялхуçалăх ĕçĕсем валли 12.700 специалист вĕренсе тухнă пулсан, кăçал 26.000 специалист вĕренсе тухать.

Малалла оратор касçи шкулсене нумайлатас, заочно вĕрентмелли системăна сарас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен каланă. Çапла вĕрентни çĕршер пин рабочисене производствăра ĕçленипе пĕрлех аслă шкулсенчен вĕренсе тухма май парать. 1960 çул тĕлне заочно вĕренмелли аслă шкулсемпе касçи аслă шкулсенчи студентсен йышне пĕр миллион çынна çити ӳстерме палăртнă.

Юлашкинчен Елютин юлташ наука кадрĕсем вĕрентсе хатĕрлес ĕçе лайăхлатма, ученăй степеньсемпе званисем панă чухне пысăкрах требованисем лартма кирли çинчен каланă.

Улттăмĕш пилĕк çуллăх план çинчен Н. А. Булганин юлташ тунă доклатра, тенĕ **Н. В. Лаптев** юлташ (Челябинск парторганизацийĕ), калама çук пысăк ĕçсем тума палăртни çинчен каласа панă. Çак ĕçсене аслă Совет государстви çеç пурнăçлама пултарать. Ку плана пурнăçа кĕртни пире коммунизм çулĕпе татах та хăвăртрах малалла кайма май парĕ.

Челябинск облаçĕнчи промышленность иртнĕ пилĕкçуллăх заданийĕсене срокчен пурнăçланине палăртса, Лаптев юлташ промышленноçа малалла аталантармалли майсем çинчен каласа панă. Облаçра хура металлурги уйрăмах хăвăрт ӳссе пымалла. Оратор Кустанай облаçĕнчи, Казах ССР-ĕнчи тимĕр руди кăлармалли вырăнсемпе усă курмашкăн хăвăртрах тытăнма кирли çинчен каланă.

Малалла Лаптев юлташ Кăнтăр Уралти промышленноçа тата хула халăхне шыв парса тăрассине лайăхлатас, строительство предприятийĕсен производство базине ӳстерес ĕçпе сыхăнса тăракан ыйтусене хăвăртрах татса пама кирли çинчен каланă.

Трибуна çинче—**М. Рейман** юлташ. Ăна делегатсемпе хăнасем ăшшăн кĕтсе илнĕ. Вăл съезда Германири Коммунистсен партийĕн тата Федеральнăй Германи Республикинчи мĕнпур прогрессивлă çынсем ячĕпе саламланă.

Совет Союзĕ пурнăçласа пыракан мир политики, пĕр-пĕрне ăнланса пурăнмалла тăвас политика, тенĕ Рейман юлташ, Совет Союзĕн авторитетне çирĕплетрĕ. Федеральнăй Германи Республикинчи ĕçсыннисем Совет Союзĕпе ырă кӳршĕлле сыхăнусем тытасшăн. Çавăнпа та Совет Союзĕпе Федеральнăй Германи Республикин хушшинче дипломатилле çыхăнусем туса хунине миллионшар простой çынсем пĕтĕм чĕререн ырласа саламларĕç. Анчах Хĕвеланăç Германире совет халăхне лайăх сыхăнусем тытса пурăнмашкăн чăрмантарма тăрăшакан, иртнĕ вăрçăра поражени тӳснĕшĕн тавăрма ĕмĕтленекен вăйсем пур. Германи империалисчĕсемпе милитарисчĕсем Хĕвеланăç Германи территорийĕ çинчен çĕнĕ вăрçă пуçлама хатĕрленессĕ. Мире çăмăрме хăтланакан Германи империалисчĕсене татăклă отпор парас, милитаризма хирĕç кĕрешме мĕнпур рабочисене, мĕнпур патриотсене çирĕп фронта пĕрлештерес, çапла вара Хĕвеланăç Германири халăха мир, демократи тата прогресс çулĕпе илсе пырас тесе, эпир, коммунистсем, икĕ хут нумайрах вăй хурса тăрăшăпăр. Çак çул çавăн пекех Германие демократи никĕсĕ çинче пĕрлештересси патне илсе пырать.

Унтан Австрири Коммунистсен партийĕ ячĕпе **И. Копленинг** юлташ саламлă сăмах тухса каланă. Ăна съезд делегачĕсем ăшшăн кĕтсе илнĕ.

Совет Союзĕн мирлĕ политикине пула, тенĕ Копленинг юлташ, иртнĕ çул Австрипе государство договорĕ турĕç, çапла вара вăл суверенлă çĕршыв пулса тăчĕ. Парламент пирĕн çĕршыв яланах нейтралитет тытасси çинчен пĕлтерчĕ. Çакă вăл икĕ система—социализмпа капитализм пĕр-пĕринпе мирлĕ пурăнас принципне йышăннипе, пĕтĕм тĕнчери мире сыхласа хăварассишĕн тата çирĕплетессишĕн пыракан кĕрешӳпе тачă сыхăнса тăрать.

Малалла Копленинг юлташ çакна палăртать: Австрире империалистла агрессорсен интересĕсемшĕн пирĕн çĕршывăн нейтралитетне пăсма, çĕршыва çав агрессорсен аллине пама тăрăшакан вăйсем халĕ те пур-ха. Шăпах çак вăйсем ĕнтĕ провокацилле ĕçсем тăваççĕ. Вĕсем, сăмахран, Пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен федерацийĕн секретариатне Венăран кăларса яраççĕ. Анчах эпир, тенĕ оратор, КПСС XX съезчĕпе пĕтĕм совет халăхне çапла шантарса калама пултаратпăр: Австри халăхĕ миршĕн, нейтралитетшăн, хăйĕн çĕршывĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн тăрать, çаксене вăл пĕтĕм вăйпа хӳтĕлĕ. Эпир, коммунистсем, çак кĕрешӳ пуçне тăрасси пирĕн тивĕç пулса тăрать тесе шутлатпăр, Австри халăхĕпе Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхне çирĕплетме мĕн кирлине пĕтĕмпех тăвăпăр. Рабочи класăн пĕрлĕхне çирĕплетессишĕн, ĕçсыннисен экономика тĕлĕшĕнчи интересĕсене хӳтĕлессишĕн кĕрешессине те Австрири Коммунистсен партийĕ хăйĕн пысăк задачи тесе шутлать.

Копленинг юлташ тухса каланă хыççăн председатель пулса ертсе пыраканĕ КПСС XX съездне Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи Коммунистсен партийĕн Национальнăй Комитечĕ янă саламлă çыру текстне вуласа панă. (ТАСС).

А. И. Микоян юлташ сăмахĕ

Юлташсем! Эпĕ партин Центральнăй Комитечĕн отчетлă доклачĕпе пĕтĕмпех килĕшетĕп, хамăн сăмахра унăн ĕçĕсен хăшпĕр енĕсем çинче кăна чарăнса тăрасшăн.

Центральнăй Комитетăн отчетĕнче этемлĕхĕн хальхи тапхăрти историйĕнчи çĕнĕ фактсемпе паллă ĕçсене пăхса тухаççĕ. Вĕсене марксизм-ленинизм позицийĕсенчен пăхса тухса, Центральнăй Комитет паллă, теори тĕлĕшĕнчен хăюллă, тарăн принциплă нумай выводсем тăвать. Çав выводсем общество аталанăвĕн законĕсемпе тата вĕсемпе хальхи условисенче усă курас ĕçпе сыхăнса тăраççĕ. Марксизм теорийĕн хальхи вăхăтри лару-тăруна килĕшсе тăракан тĕп ыйтăвĕсене кăларса тăратнă. Çак ыйтусенчен тухса тăракан выводсем теори тĕлĕшĕнчен кăна мар пахха пулса тăраççĕ, вĕсем, программа вырăнне шутланса, коммунизм строительствин малашнехи аталанăвĕн тапхăрĕсенчи тĕрĕс политикинĕн практикăлла пысăк пĕлтерĕшлĕ пулассĕ. Сакна май марксизм-ленинизм нумай енчен пуянланса пырать, общество аталанăвĕ çинчен вĕрентекен марксистла-ленинла наука пахха çитĕнӳ тăвать. (Алă çупаççĕ).

Хрущев юлташăн докладĕнчи выводсемпе теорилле шухăшсем çакăн çинчен калаççĕ: пирĕн Центральнăй Комитет марксизм-ленинизмăн теорилле паллă положенийĕсене тепĕр хут ахаль çеç пăхса тухмасть—вăл Коммунистсен партийĕн историйĕпе пуянланнă, пысăк опытлă организм çапла пулмалла та. Общество аталанăвĕн законĕсене пĕлсе пымалли марксистла пахха меслетсемпе усă курса, Центральнăй Комитет общество аталанăвĕн кучухнехи событийĕсене тĕрĕс ăнланмалăхне кăтартса парать, вĕсене марксистла ăнлантарса парать тата рабочи класа выводсемпе хĕçпăшаллантарать. Çав выводсем халĕ ĕнтĕ Маркс тата Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсен вăхăтĕнчи фактсемпе событисене кăна мар, капитализм çĕршывĕсенче, çавăн пекех социализм çĕршывĕсенче калăпланса пулса иртнĕ событисене пĕтĕçтерсе тата ăнлантарса параççĕ. Эпĕ авларах çав ыйтусемпе хăшпĕрисем çинче, вĕсем чи паллă та чи кирлĕ ыйтусем пулнă пирки, чарăнса тăрасшăн.

Центральнăй Комитетăн тата унăн Президиумĕн юлашки виçĕ çул хушшинчи ĕçне кăтартса паракан тĕп уйрăмлăх вăл пирĕн партире нумай вăхăт иртнĕ хыççăн коллективлăн ертсе пырассине туса хуни пулать. (Алă çупаççĕ).

Пирĕн партин халĕ ертсе пыракан çирĕп пĕтĕçнĕ коллектив пур. Çак коллективăн вăйĕ унта темиçешер çулсем хушши революцилле кĕрешӳре пĕрле ĕçленĕ юлташсем пулнинче кăна мар. Унта çавăн пек юлташсем пулни, паллах, питĕ кирлĕ. Çак коллектив вăйĕшĕн чи пахха çакă пулать: вăл, парти строительствин тата партие ертсе пырас ĕçĕн ленинла идейисем, ленинла принципĕсем тăрăх ĕçлесе, кĕскĕ срокрах парти пурнăçĕн Ленин туса хатĕрленĕ нормисене сӳлтен пуçласа аяла ситнех малтанхи пек пурнăçа кĕртсе пыма тытăннă. (Алă çупаççĕ).

Коллективлăн ертсе пымалли принцип пролетари партийĕн, ленинла партин ĕçĕнче тĕп вырăнта пулмалла. Анчах çак тахçантанпа паллă чăнлăха акă мĕншĕн аса илме тивет: юлашки 20 çул хушшинче яхăн пирĕн, тĕрĕссипе илсен, коллективлăн ертсе пырасси пулман, уйрăм çынсене пысăка хурас йăла пуçпулса тăнă. Çавăн пек йăлана Маркс, ун хыççăн Ленин та сивленĕ пулнă. Ертсе пырас ĕçре çавăн пек йĕрке пулса тăни, паллах, парти пурнăçне тата унăн ĕçне сиен кӳмесĕр тăма пултарайман. Халĕ ĕнтĕ, юлашки 3 çул хушшинче ленинла принциплăхăн тата ленинла пĕрлĕхĕн никĕсĕ çинче Коммунистсен партине коллективлăн ертсе пырас ĕçе малтанхи пекех туса пыма тытăннă хыççăн, ертсе пырас ĕçĕн ленинла меслечĕсен влиянийĕ питĕ усăллă пулни сисĕнет. Çакăнта пулать ĕнтĕ пирĕн партин юлашки çулсенчи çĕнĕ вăйĕн тĕп çăлкуçĕ. Çакă пулчĕ те ĕнтĕ Хрущев юлташ докладĕнче палăртнă ӳсĕмсене тумалли чи кирлĕ услови. Парти коммунизм тăвас çулпа малалла татах та шанчăклăрах, татах та ăнăçлăрах каяссин палли те çавах пулать. (Алă çупаççĕ).

Центральнăй Комитет юлашки çулсенче вăраха ямасăр пăхса тухмалли питĕ кирлĕ ыйтусене татса панă. Ун çинчен отчетлă доклатра каланă. Центральнăй Комитет уйрăмах промышленноçа, чи малтанах йывăр промышленноçа хăвăрт аталантарасси çине, промышленноçра, транспортра, ялхуçалăхĕнче, суту-илӳре техникăлла прогресс тăвассишĕн, ĕç тухăçлăхне ытларах ӳстерессишĕн, промышленность изделийĕсен пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешӳ сарса ярасси çине уйрăмах тимлĕн пăхнă.

Ялхуçалăхĕ юлса пынине пĕтересси, çакна пула промышленность аталанăвĕпе ялхуçалăх аталанăвĕ хушшинче пулса тăнă диспропорцие (çав диспропорци пирĕн çĕршывшăн ытла та хăрушă, малалла та пулса пынă пулсан, вăл пире питĕ пысăк чăрмав кӳнĕ пулĕччĕ) пĕтересси тĕп вырăнта пулнă. Çак задачăна тĕрлĕрен майсемпе, колхозниксене пурлăх тĕлĕшĕнчен хавхалантарассине ӳстернипе, халиччен сухаламан тата нумай вăхăт хушши сухаламасăр выртнă çĕрсемпе усă курма тытăннипе тата ытти çавăн йышши майсемпе татса панă. Икĕ çул хушшинче 33 миллион гектар çĕнĕ çĕрсемпе усă курма тытăннă. Хăçан та пулсан ĕлĕк эпир çакăн пек ĕçсем тăвасси çинчен ĕмĕтленме пултарнă-и?

Çакăнпа пĕрлех США-н ялхуçалăхĕнче мĕн пулса иртет-ха? США правительстви кăçалхи январь уйăхĕнче президент урлă панă посланипе акакан çĕрсен лаптăкĕн 10 миллион гектарне консерваци тума конгреса програма тăратнă. Çакă вăл ялхуçалăхĕнчи производительнăй вăйсене тӳрремĕнех сĕмĕрсе тăкни пулса тăрать, вăл капитализм çĕрсе пынине çĕнĕрен яр-уççăн кăтартса парать. США-ра та халиччен сухаламан тата нумай вăхăт хушши сухаламасăр выртнă çĕрсен проблемине кăларса тăратассĕ иккен, анчах пачах кутăнла, американецсем пек, халĕ тырпул акса тăвакан çĕрсене сухаламасăр выртмарăкан çĕрсем туса хураççĕ. (Залра кулассем илтĕнеççĕ). Çакă вăл «тĕнчере пуçпулса тăма» ĕмĕтленекен çĕршывра тата Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн официальнăй данăйĕсем тăрăх капитализм çĕршывĕсенче кирлĕ таран апат-çимĕç илсе тăрайман çынсен хисепĕ ӳссе пынă вăхăтра пулса иртет. Çавăн пек çынсен хисепĕ 1939 çулта тĕнчери пĕтĕм халăхăн 31 проценчĕ пулнă пулсан, халĕ 59 процента çитнĕ. Çав вăхăтрах США-ра акакан çĕрсен лаптăкне 10 миллион гектар пĕтерме сĕнессĕ!

«Тĕнчере пуçпулса тăма» ĕмĕтленни мĕне пĕлтернине çакă та лайăх кăтартса парать: Сывăх Хĕвелтухăçĕнче 1955 çулта Америкăпа Англин нефть монополийĕсем 150 миллион тонна нефть кăларнă, çав нефть вĕсене пĕтĕмпе те 240 миллион доллара, тепĕр майлă каласан, юмахри пек йӳне ларнă, таса услам вара çав нефтьрен вĕсем 1.900 миллион доллар илнĕ, пĕр çулталăк хушшинчех нефть кăларакан çак района хывнă укса-тенкĕн хакне кăларнă, Кувейтра, сăмахран, вара пĕр кварталтах мĕнпур вăхăтра хывнă укçа-тенкĕ чухлĕ услам илнĕ. США-ри нефть промышленноçĕнче производствăна хывнă укса-тенкĕ хакне кăларма сахалтан та 6—7 çул кирлĕ пулĕччĕ.

Нефтьрен илекен пĕтĕм тупăш нефтĕн законлă хуçисем—арабсен тата Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи ытти халăхсен аллинче юлнă пулсан, çак халăхсем мĕнлерех хăвăртлăхпа чухăнлăха тата ют çĕршыв капиталĕ темиçешер çул хушши пĕр хĕрхенмесĕр эксплуатациленине пула экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен кая юлнине пĕтернĕ пулĕччĕç.

«Тĕнчере пуçпулса тăрас» тени эксплуатаци çĕнĕ, тӳрремĕнех палăрман формисене шыраса тупнинче те палăрать. Азири тата Африкăри нумай халăхсем колонилле пусмăрлăхран хăтăлчĕç, анчах çак халăхсен тулашри рынокĕнче, Америка тата Англи монополийĕсем хуçаланса тăнине пула, тĕрĕс мар хаксем туса хунă,—çакна начар аталаннă çĕршывсенчи халăхсем хăйсем палăртассĕ. Тепĕр майлă каласан, экспортпа импорт хакĕсем хушшинче хăйне евĕрлĕ «хачă» туса хунă, çавна пула çав халăхсем (ООН даннăйĕсем тăрăх) хăйсем сутакан таварсемшĕн хăйсен çĕршывĕсене кирлĕ таварсем, хальхи ĕмĕр пуçламăшĕнчипе танлаштарсан, 40 процент чухлĕ кăна илме пултараççĕ. Акă мĕнле вăл начар аталаннă çĕршывсемшĕн «тăрăшни» тата вĕсене «пулăшни»!

Пирĕн ялхуçалăхĕн аталанăвĕ пирки калас пулсан, çакна палăртмалла: ялхуçалăхĕ юлса пынипе пĕтересси, малалла, çĕр лаптăкĕсене чи кирлĕ культурăсем акма пĕлсе уйăрса панипе, ялхуçалăх ĕçĕсене комплекслă майпа механизациленипе, ялхуçалăхне организаци тĕлĕшĕнчен ертсе пырассине урăхлатса çĕнетнипе, ялхуçалăхне планлас ĕçе улăштарнипе пулса пырать. Центртан планлас бюрократла йĕркене, ĕçшĕн сиенлĕ пулса тăракан йĕркене, пăрахăçа кăларнă, акмалли лаптăксене тата тырпул тухăçлăхне культурăсем тăрăх планлассине, выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне планлассине колхозсене хăйсене панă, центр вара государствăна памалли тата сутмалли продукции хисепне çеç палăртать.

Çак мероприятисем ялхуçалăхне хăвăрт çĕклеме, пирĕн экономикăра пулса тăнă диспропорцие пĕтерме тата рабочи класпа хресченсен союзне малалла нумай çирĕплетме пулăшассĕ.

Халех ĕнтĕ ялхуçалăх тухăçлăхне ӳстерни палăрчĕ, çавна пула апат-çимĕç продукчĕсем тата халăха куллен кирлĕ промышленность таварĕсем туса кăларассине чылаях ӳстерме май килчĕ.

Çакăн пек задача лартнă: улттăмĕш пилĕкçуллăх вĕçленнĕ тĕле халăха кирлĕ таварсен хисепне, вăрçăченхи 1940 çулхипе танлаштарсан, 3,5 хута яхăн ӳстерме, çав шутра аш-какайпа пулă—3,2 хут, консервăсем—5,6 хут, выльăх çăвĕ—3,9 хут, урăхла каласан, тăвата хута яхăн, сахăр—3 хут, пурçăн пир-авăр—14 хут, çăм пир-авăр—3 хут, çĕвĕ çĕлемелли машинăсем—22 хут, сехетсен хисепне 12 хут ӳстерме задача лартнă т. ыт. те.

Халăх куллен ыйтакан, анчах хальхи вăхăтра çитмен таварсене нумай туса кăларма тытăннине акă мĕнпе ăнлантарса памалла: пирĕн партин Центральнăй Комитечĕ чылай çĕрте таварсем пур чухне те çитменнине тата хăшпĕр таварсемшĕн черет пулнине пĕтерессишĕн тăрăшать. Тепĕр чухне çакăн пек ыйту параççĕ: суту-илӳре хăшпĕр чухне таварсем çитменни тата дефицитлă таварсемшĕн черет пулмаллах-ши вара? Неушлĕ вĕсем социализмла суту-илӳпе çыхăнса тăракан япаласем пулмалла? Паллах, çук. Вĕсем таварсен пĕтĕм хисепĕпе халăх таварсем илме пултарни хушшинче тĕрĕс баланс çук чухне пулассĕ.

Социализмла обществăра халăх таварсене государство сутинчен ытларах туянма пултарни кирлĕ. Халăх таварсем туянма пултарасси пĕрмай ӳссе пыни таварсем туса кăларассине ӳстерме хушать. Ыйту мĕн пурĕ те халăх тавар туянма пултарни ăна туса кăларниччен мĕн чухлĕ малта пынинче. Таварсен пĕтĕм хисепĕпе халăхăн укса-тенкĕ тупăшĕн хушши пысăк пулни обращени сферинчи диспропорци патне илсе пырать, вăл совет суту-илĕвне хирĕçле явлени пулса тăрать, ун чухне вара хăшпĕр таварсем çитмессĕ, черетсем пулассĕ, вăл суту-илӳ ĕçне япăхлатать тата таварсен пахалăхĕшĕн кĕрешессине йывăрлатать.

Халĕ пирĕн çавăн пек диспропорцие пĕтермелли пур майсем те пур. Тĕрĕс планлани малашне обращени сферинче çавăн пек диспропорцисем пуласрасинчен хăтăлма тата пилĕкçуллăхăн малтанхи çулĕсенчех хăшпĕр çĕрте таварсем çитменнине тата черетсем пулнине пĕтерме май парать. Çакă вăл тавар илекенсем валли кирлĕ условисем туса пама, суту-илӳри культурăлăха ӳстерме, тавар илекенсен ыйтăвĕсене туллинрех тивĕçтерме, пĕтĕм таварсен пахалăхне хамăр тата ытти çĕршывсенчи чи лайăх таварсен пахалăхĕн шайне çитерме тата пĕтĕм суту-илӳпе обществăлла апатланăва социализмла обществăн ыйтăвĕсене тивĕçтерекен çĕнĕ, татах та çӳлĕрех шая хăпартма май парать. (Алă çупаççĕ).

Халăха питĕ кирлĕ таварсем туса кăларассине татăклăн ӳстермелле тата малалла таварсен хакĕсене йӳнетмелли çакăн пек политикăна тытса пымалла: таварсен хакĕсене вĕсене туса кăларассине ӳстернине тата халăх тавар туянма пултарни ӳснине кура йӳнетмелле. Çакăн пек чухне çеç халăх тавар туянассипе ăна тавар сĕнесси хушшинче тĕрĕс çыхăну пулать.

Çакна тӳрех йышăнмалла: пирĕн магазинсемпе столовăйсен ĕçĕсем урăх çĕршывсенчи чи лайăх магазинсемпе столовăйсен ĕçĕсенчен япăхрах пулса пыраççĕ. Çакна тĕрĕс хак парса, пирĕн суту-илӳ тата обществăлла апатлану ĕçне хăвăртрах лайăхлатас пулать. Пирĕн магазинсемпе столовăйсем сахал, вĕсен шутне ӳстермелле, вĕсене техника тĕлĕшĕнчен пуянлатмалла, столовăйсемпе магазинсенче апатсемпе таварсене çынсене суту-илӳ работникĕсемсĕрех сутма майсем туса пырса, ĕçе организацилессине лайăхлатмалла. Хальхи вăхăтра Америкăра 2 миллиона яхăн автомат ĕçлет, пирĕн вара автоматсем питĕ сахал. Автоматсене пур майсемпе те ĕçе кĕртсе пымалла. Çакă вăл тавар илекенсем валли лайăх условисем тума, суту-илӳре пулакан тăкаксене чакарма, суту-илӳ работникĕсене ĕç тухăçлăхне ӳстерме май парать.

Суту-илӳпе обществăлла апатлану ĕçне тĕпренех лайăхлатас тесен, суту-илӳ предприятийĕсене ертсе пырас ĕçе децентрализацилессине, вĕсене ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен аллине парас ĕçе вĕçлемелле, суту-илӳпе обществăлла апатлану ĕçне куллен тĕрĕслесе тăма тата лайăхлатма рабочисем, служащисем тата килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинчен чи активлă çынсене анлăн явăçтармалла. Вĕсемсĕр пуçне кам-ха суту-илӳри мĕнпур çитменлĕхсене чи малтан курса тăтăр, тĕрĕслетĕр тата çав çитменлĕхсене пĕтерсе

(Малалли 2-мĕш страницăра).

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН XX СЪЕЗЧĔ

А. И. Микоян юлташ сăмахĕ

(Малалли).

пытăр. Профессилле союзсен контроль ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнмалла, вырăнти Советсен вара палăртнă çитменлĕхсене пĕтерсе пымалла.

Пирĕн Центральнăй Комитетăн ĕçĕнче çавăн пекех паллă енсем çаксем пулнă: бюрократла централизаци хирĕç татăклăн кĕрешни тата ленинла демократилле централизма тулли правасене çирĕплетни; совет нацийĕсен союзне, союзлă республикăсен суверенлă прависене улăхни тата çирĕплетни, союзлă республикăсен аллине вĕсен пăхса тухмалла ĕçсене пурне те пани, уйччен вĕсем центр аллинче пулнă, çакă вăл тĕрĕс пулман; сăмахран, центра пăхăнса тăракан промышленность предприятийĕсен пысăк хисепне халĕ вырăнти органсене пăхăнса тăмалла тунă; вырăнти Советсене предприятисен прависене пысăклатни, рабочисен массисене хуçалăх планĕсене туса тата пăхса тухас ĕçе анлăн хутăштарни, вĕсене производствăна ертсе пырас ыйтусене татса пама активлăн хутшăнтарни; государство аппаратне пĕчĕклетни тата ансатлатни, çав тери нумай сиен кўнĕ комчванствăпа мăнна хунине, пустуй мухтаннине, чаплă рапортсем парса ларнине хирĕç тата критикăпа самокритикăна анлăн сарассишĕн кĕрешни.

Ытти пысăк ĕçсенчен Госплана икĕ Госплан çине пайланине — малашлăх ĕçсене тата кулленхи ĕçсене планлас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисем туннине палăртмалла. Вĕсене пуласлăх ыйтăвĕсене пăхма кун ыйтăвĕсем хушшинче тĕрĕс сыхăну тытса пырас, çак органсен пĕрле контроллесе тăнипе экономикăра диспропорци тăвас мар тĕллевпе тунă.

Ленин экономикăна план тăрăх аталантарассишĕн нумай тăрăшнă. Сакна асра тытса, эпир кучухнехи условисенче Госплана реорганизацилесси çинчен Центральнăй Комитет йышăннă решени Ленин хăй вăхăтĕнче Госплан умне лартнă требованисене килĕшсе тăнине шанса тăратпăр.

Капитализм тĕнчинче экономикăри пропорцисем стихийăлла, конкуренци, производство анархийĕ тата кризиссем урлă пулса пыраççĕ. Социализм экономикинче пропорцисене пачах урăхла, организованнăй обществăн ирĕклĕхĕпе, экономика аталанăвĕн объективлă законĕсен требованийĕсем çинче никĕсленĕ наукăлла плансене тăваççĕ. Çавăнпа экономика план тăрăх аталанасси тата экономикăра пысăк диспропорцисем тăвас марри планлас ĕçе тĕрĕс, наукăла кăтартнă пек туса пынинчен килет.

Хрущев юлташăн докладĕ — вăл туни çинчен калакан отчет кăна мар. Центральнăй Комитетăн отчетĕнче тата улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе паракан Директивăсен проектĕнче коммунизм тăвас çулпа хăвăртрах малалла кайма пысăк та тĕплĕ программăна палăртнă, ăна съезда пăхса тухма тăратнă. Çав программăра промышленноса тата пĕтĕм халăх хуçалăхне аталантармалли çул-йĕр çинчен, социализмла стройăн ўссе пыракан майĕсене халăхăн пурнăçне малалла чылай лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем çинчен каланă.

Кашни çын пуçне продукци туса кăларас енĕпе капитализм çĕршывĕсене хуса çитсе иртсе каяс задача лартса, эпир кашни çын ыйтăвне тивĕçтерес тĕлĕшпе капитализмла чи пуян çĕршывсене хуса çитсе иртсе каяс, хамăр çĕршывра халăха кирлĕ пур тĕрлĕ таварсене нумайран-нумай туса кăларас задача лартатпăр. (Алă çупаççĕ).

Çынсен савăк пурнăçне нумай социальнăй ĕçсем тăвасси çинчен, ĕç кунне кĕскетесси, ĕç укçи сахал илекен рабочисемпе служащисен ĕç укçине ўстересси, ватăлса çитнĕ çынсем валли государство çурчĕсем организацилесси тата пенси парса тăнипе, ача яслисемпе ача сачĕсем нумай тунипе, шкул ачисем валли интернатсем организацилесси, вĕренекенсене ирхине шкулта апатлантарассине йĕркелени тата обществăлла апатлану предприятийĕсем нумай тунине рабочисемпе служащисене хăйсен ачисене воспитани пама тата ватă ашшĕ-амăшĕсене пăхса усрама пулăшасси çинчен пырать. Юлашкинчен, пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвне хăвăртрах татса парас тĕлĕшпе тăвакан ĕçсене тата сывлăха сыхлас, халăха вĕрентес ĕçсене лайăхлатассине те çакăнтах кĕртмелле.

Ĕç укçи сахал илекен рабочисемпе служащисен ĕç укçине ўстерни пирĕн экономикăра пулнă хăшпĕр диспропорцие пĕтернине, ĕç укçи сахал илекен рабочисемпе служащисем тата ĕç укçи нумай илекен работниксем хушшинчи пысăк уйрăмлăха пĕтернине пĕлтерет. Эпир хресченсен çĕршывне индустриализацилени вăхăтра çавăн пек уйрăмлăх пулмалли паллах ĕнтĕ, мĕншĕн тесен ĕç укçи нумай тўлени уйчухне çĕршыва питĕ кирлĕ пысăк квалификациллĕ рабочисене хăвăрт хатĕрлемелли стимул пулнă.

Халĕ пирĕн пысăк квалификациллĕ, пысăк культурăллă рабочи класс пур, вăл хăйĕн [illegible]

Çавсем вĕсем — коммунизмăн пуçламăш палăрăвĕсем. Ку вăл пурнăçăн коммунизмла йĕрки патне куçма çул уçса парать. Çакă пире пурне те савăнтарать тата хавхалантарать. Ăй тив, çакăн çинчен хăйсен панихха пулмалăхĕпе тата америкăлла пурнăç йĕркипе тивĕçсĕр мухтанакан мăнкăмăллă американецсем те пĕлччĕр, ан тив, çак енĕпе пирĕнпе ăмăртăва тухчăр, халăх пурнăçĕн ĕçта ытларах тăрăшнине, камăн пурнăç йĕркийĕ лайăххине курса ĕненччĕр. Ан тив, вăсем хĕçпăшалланас выляние вĕсем çавăн пек ăмăртма килĕшчĕр. Пире, совет çыннисене, тата Америка халăхне те çавăн пек ăмăрту ытларах кăмăла кайть! (Алă çупаççĕ).

Тулашри политикăн хăшпĕр ыйтăвĕсем

Совет Союзĕн тулашри политикин çитĕнĕвĕсем, уйрăмах иккĕмĕш çулталăкри çитĕнĕвĕсем, питĕ пысăк. Парти ертсе пыракан коллективĕ кунта та, тулашри политикăна активлăн, çапăçуллăн, çўлĕ пусăмри принципсемпе, лăпкăн та атласуллăн тытса пырса, Ленин тĕрлĕ обществăлла стройлă çĕршывсем мирлĕ килĕштерсе пурăнма пултарасси çинчен калаканне асра тытса, хăйĕн умĕнчи тĕп тĕллеве — вăрçă хăрушлăхне сирсе ярас тата пĕтĕм тĕнчере мир туса хурас тĕллеве пурнăçласа пырса, çăлă усă сыхлăн кĕртрĕ.

Пирĕн тулашри политикăра халиччен хăшпĕр йăнăшсем пулнă, хăшпĕр чухне хамăр айăпа пулас хутшăнусем çивĕчленнĕ пулсан, тĕнчери лару-тăру тĕлĕшĕнчи чылай ыйтусем тăрăх çавăн пек фактсем пулни çинчен пирĕн Правительство уççăнах калама хăрамарĕ,—çакăнтан буржуалла нумай деятельсем тĕлĕнчĕç. Совет правительстви пирĕн тулашри политикăри çитменлĕхсене пĕтерес çулпа хăюллăн малалла пычĕ. Çакă вăл Совет Союзĕпе Югослави хушшинчи хутшăнусем çинчен тăракан ыйтусене татса панă тĕслĕхрен пуринрен ытларах курăнчĕ. Паллах ĕнтĕ, çакăн пек утăмсене, Югослави ыйтăвĕ тĕлĕшпе Центральнăй Комитет XIX тата XX съездсем хушшинче тунă утăмсене, чăнчăн ленинецсем кăна тума пултараççĕ. Çак хăюллă утăмсем çав тери тĕрĕс пулни, вĕсем мирпе социализм ĕçĕн кун-çулĕшĕн çав тери анăçлă пулни халĕ ĕнтĕ лайăх курăнать. (Алă çупаççĕ).

Тата ытти чылай ĕçсем те — Китайпа Финляндире хамăрăн çар базисене пĕтерни, халăх демократи çĕршывĕсенчи хутăш обществăсене пĕтерни, Австрипе мирлĕ договор туни тата ыттисем те пирĕн политикăн хăюллăхĕ çинчен, вăл принциплă пулни, ытти çĕршывсен суверенлă прависене хисеплени, унăн активлăхĕ çинчен, çавăнпа та вăл анăçлă пулни çинчен калаççĕ.

Тулашри политикăна тытса пынă чухне эпир, Ленин вĕрентнĕ пек, лару-тăрăвăн конкретлă уйрăмлăхĕсене, вăйсен чăнчăн шайлашăвне шута илетпĕр, уйрăм çĕршывсен пĕр-пĕр паллă тапхăрта, пуринчен ытларах пирĕншĕн тĕп вырăнта тăракан ыйту—миршĕн кĕрешес ыйту тĕлĕшпе тытса пынă политикăн ăраснăлăхĕсемпе палăрăмĕсене тĕрĕс хаклатпăр. Çавăн чухне пирĕн дипломати, пирĕн тулашри суту-илупе экономика органĕсен урăх государствăсемпе тата çав çĕршывсен гражданĕсемпе сыхăнса тăрас ĕçри вăйлă çитĕ формисене пăрахăçланă, совет çĕршывĕн обществăлла организацийĕсене государство организацийĕсен тулашри тĕнчерен уйрăлса тăнине пĕтернĕ. Совет Союзĕпе урăх çĕршывсен государство, парти деятелĕсем тата обществăлла организацийĕсем пĕр-пĕрипе тытакан сыхăнусене сарса пынă.

Çĕршывсем хушшинчи сыхăнусене пăсас тĕлĕшпе Америкăри паллă агрессилле ушкăнсем киревсĕр ĕçсем турĕç. Çапах та вĕсем, Совет Союзĕ «тимĕр чаршав» карни çинчен элек сарса, айăпа хăйсем çинчен сирсе совет çыннисем çине, чирлĕ пуç çинчен сывă пуç çине йăвантарма хăтланчĕç. Çакна вĕсем «совет режимĕн» темĕнле «вăйсăрлăхĕ» пек, эпир совет çыннисен урăх çĕршывсен çыннисемпе тĕл пулсан мĕн те пулин туххе тăрасран хăранă пек кăтартма пăхрĕç. Тата çапла каласси патнех—çавăн пек сыхăнусем пирĕн государство стройне вăйсăрлатма пултараççĕ, тесе каласси патнех çитрĕç.

Эпир çак элеке сирсе яма тата чикĕ леш енчи çĕршывсемпе государство енĕпе те, общество енĕпе те, искусство, туризм, спорт тата ытти енĕпе те сыхăну тытассине анлă сарма пултартăмăр.

Пĕрисемпе, демократилле çĕршывсемпе, ку сыхăнусем питĕ лайăх аталанаççĕ тата çав сыхăнусене вĕсемпе татах майлатса пыма пирĕн пысăк малашлăхсем пур. Хăшпĕр государствăсемпе, сăмахран США-па, сыхăну тытас ĕç, Америка халăхĕн тата США-ри нумай обществăлла организацисен сыхăну тытас кăмăлĕ пысăк пулсан та, госдепартамент уççăнах çавна хирĕç тăнă пирки, арай-аран шăвать.

Çакăн пек тĕслĕх илсе кăтартма пулать. Иртнĕ çулта Америкăри ресторансен представителĕсем Мускавра хăнара пулчĕç—чаплă вырăнсене курса çўрерĕç, хăйсен паллашас текен предприятисенче—ресторансенче, столовăйсенче пулчĕç. Пĕр-пĕрин патне кайса çўрес йĕркепе пирĕн çынсен США-на кайса курччăр тесе эпир хамăр енчен ыйту та лартманччĕ. Эпир хăнасене лайăх йышăннипе кăмăллă пулса, Америкăран килнĕ хăнасем, Америкăри массăлла апатлану предприятийĕсен ĕçĕпе паллаштарас шутпа, ресторан ĕçĕн Мускаври специалисчĕсене хăйсем патне пырса курма чĕнчĕç. Çапла ку ĕçре пĕр-пĕрипе сыхăну тытасси йĕркеленме пуçланнăччĕ. Нумаях пулмасть Мускаври обществăлла апатлану предприятийĕсенчи пилĕк работник Америкăна кайма хатĕрленнĕччĕ, анчах сасартăк госдепартамент çав çынсене США-на пыма ирĕк пама килĕшменни çинчен пĕлтерчĕ. (Залра хускалса илессĕ, кулассĕ). Госдепартаментăн хăшпĕр деятелĕсемшĕн пирĕн поварсемпе кулинарсем те хăрушă иккен. (Кулаççĕ, алă çупаççĕ). Кам сыхăну тытасран тăнă, кам сыхăну тытассине хирĕç тăни çак пĕчĕк фактран та лайăх курăнать ĕнтĕ.

Чикĕ леш енчи çĕршывсенчи тăшманла ушкăнсем совет политикине агрессиллĕ политика пек кăтартма хăтланса саракан элеке эпир хамăр сăмахсемпе тата ĕçсемпе тăрă шыв çине кăларатпăр, пирĕн политика мирлĕ характерлă пулнине кăтартса паратпăр. Эпир урăх çĕршывсен çыннисемпе тĕл пулассинчен хăрани çинчен вĕсем айвана шухăшсем сарнăччĕ, çав шухăшсене эпир пĕтĕмпех сирсе ятăмăр.

Коммунистсен капитализмла çĕршывсенчи çынсемпе тĕл пулассинчен хăрани çинчен шухăшлани те кулăшла. Хăш обществăлла строй—Совет Союзĕн е капитализмла çĕршывсен обществăлла строй—кам хăвăрсах? Камăн идейисем — пирĕн идейăсем-и, марксистла-ленинла идейăсем-и, е капитализмла тĕнче идейисем пахарах? Чăнах та ĕнтĕ, капитализмла тĕнчен Франциri революци саманинче хăйĕн аслă идеалсем пулнă, анчах хăйĕн пурнăçĕ пăчланса пынă вăхăтра вăл прогрессиллĕ идейăсемсĕр тăрса юлнă. Авалхи идеалсем киленĕ, çĕннисем, этемлĕхе малалла ямалли идейăсем капитализмла стройăн халĕ çук, вĕсем пулма та пултараймасçĕ, мĕншĕн тесен капитализм вăл—хăйĕн ĕмĕрне пурăнса ирттерекен строй, вăл халĕ ĕнтĕ истори обозĕнче пырать. (Залра хускалса илессĕ. Алă çупаççĕ).

Хĕвеланăçĕнчи хăйсен ирĕклĕхĕпе тата демократийĕпе мухтанни вара кулăшла. Ăçтан-ха буржуалла демократие пролетарилле, социализмла демократипе танлаштарма май килтĕр? Пролетарилле, социализмла демократи—пĕтĕм халăх демократийĕ, çынна тулли тата чăн-чăн ирĕклĕх парать, буржуалла демократи вара, çынсене ачашĕн пĕр тан правасем паранçи пекки туcан та, çапах çын çынна эксплуатацилемелли йĕрке туса хурать, çав йĕркене сыхласа тăрать.

Совет социализмлă демократизм кирек мĕнле буржуалла демократизмран та нумай çўлте тăни çинчен Центральнăй Комитетăн отчетĕнче питĕ тĕрĕс каланă.

Рабочи класăн—кучухнехи обществăн ертсе пыракан вăйĕн кăна, Коммунистсен партийĕн — рабочи класс идеологине тытса пыраканăн кăна пĕртен-пĕр прогрессиллĕ идеалсем пур тата пулма пултараççĕ. Марксизм-ленинизм идейисенчен прогрессивăрах идейăсем урăх çук. (Алă çупаççĕ).

Социализмла Совет çĕршывĕ хăйне уйрăм, пĕр-пĕччен пурăннă вăхăт, эпир капитализмла çĕршывсен йĕрипавăлăхĕнче оазис пек пулнă вăхăт, иртрĕ ĕнтĕ. Халĕ уйсинчен сăмах та пулма пултараймасть. Хальхи вăхăтра, капитализмла государствăсен системипе пĕрлех, социализмла государствăсен системи пур. Социализмла государствăсем ĕмĕр-ĕмĕрлĕх туслăхпа, историлле кун-çулĕсем пĕрешкел пулнипе, пурте пĕтĕм тĕнчипех мир тума тăрăшнипе пĕр-пĕрипе тачă сыхăнса тăраççĕ. Халĕ ĕнтĕ тĕнчери çĕршывсем хушшинчи пысăк ыйтусене нихăшне те хĕвеланăçĕнчи аслă державăсен ирĕкĕпе кăна, Совет Союзĕн, Китайăн тата мĕнпур социализм çĕршывĕсен шухăшне шута илмесĕр татса пама май çук. Социализм тĕнчин вăйĕсем çав тери пысăк пулни халĕ ĕнтĕ Европăри тата Азири 13 çĕршыв, пĕр миллиардa ытла çын пурăнакан çĕршывсем, социализм туса пынинче кăна мар, социализм вăйĕсем тата çакăнта: капитализм пуçпулса тăракан нумай çĕршывсенче социализм идейисем ĕçсыннисен питĕ пысăк йышне, вĕсемпе пĕрле этемлĕхĕн пысăк пайне хăйсем майлă çавăрнă. Тĕнчери халăхсен ытларахăш пайĕ социализм ялавĕ айĕнче тăрать е социализм тăвать (Совет Союзĕнче социализм туса хунă ĕнтĕ), е социализм тума ирĕк илессишĕн кĕрешет.

100 çул каялла Маркспа Энгельс «Мĕлке çўрет Европа тăрăх—коммунизм мĕлки» тесе каланă пулсан, халĕ вара мĕлке мар, коммунизм пурнăçра палăрать, ăна миллионшар та миллионшар ĕçсыннисем туйса тăраççĕ, вăл вĕсене сывăх, Европăра кăна та мар, вăл пĕтĕм тĕнчипех тытса чарма çук çирĕп утăмсемпе малалла пырать тата хăй çинчен пурне те илтĕнмелле, тулăх сасăпа калать. (Алă çупаççĕ). Этемлĕх обществин кучухнехи пĕтĕм пурнăçĕнче коммунизм идейисен влиянийĕ питĕ вăйлă ўсрĕ.

Империализма колониализма хирĕç, вăрçă хирĕç, вăрçă хăрушлăхне хирĕç, халăхсем хушшинчи миршĕн, вĕсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешĕве илсен, хăмăлăнан çапла калама пулать: халĕ этемлĕхĕн чи пысăк пайĕ çак фронтра пирĕнпе пĕрле кĕрешет. Çакă вара мир вăйĕсемпе вăрçă вăйĕсен шайлашăвĕнче, социализмпа капитализм вăйĕсен шайлашăвĕнче пĕтĕм тĕнчипех тĕпрен улшăнусене палăртса тăрать. Халĕ ĕнтĕ, лайăх хĕçпăшалланнă пуян çĕршывсенчен нумайăшĕ капитализм çĕршывĕсемех пулса юлатăн пулсан та, капитализм социализмран вăйларах тесе [illegible] калама çук. [illegible] тăнĕнче халĕ ĕнтĕ социализм капитализмран калама çук нумай вăйларах.

Акă мĕншĕн пирĕн социализм тата капитализм идейисем пĕр-пĕрипе кĕрешнинчен хăрама кирлĕ мар, акă мĕншĕн пирĕн парти тата унăн ячĕпе парти представителĕсем—Хрущевпа Булганин юлташсем Индире, Бирмăра тата Афганистанра пулнă чухне колониализма питĕ хаюллăн питлерĕç, эпир вăрçа хирĕç тăни çинчен, анчах мирлĕн килĕштерсе пурăнас условисенче икĕ социальнăй система ăмăртассишĕн, икĕ идеологи кĕрешĕвĕшĕн тăни çинчен уççăнах каласа пачĕç. (Алă çупаççĕ).

Пĕр-пĕрипе килĕштерсе пурăнас ыйтăва хускатнă май, тĕнчери суту-илу çинчен те пĕр-икĕ сăмах калас пулать. Американецсем хăйсем шухăшласа кăларнă çул шухăшĕн—социализм çĕршывĕсемпе сыхăнса суту-илу тăвассине пўлсе пынипе Совет Союзĕ, Китай тата халăх демократийĕн ытти çĕршывĕсем вăйланассине мĕн чухлĕ те пулин чарса тăма пулать текен шухăшĕн—тилхĕнĕнче пурăнаççĕ.

Анчах çапла пуласшăн ĕненекенсем халĕ ĕнтĕ Хĕвеланăçĕнче те сахал. Пурте çакна кураççĕ: хальхи вăхăтра социализм тĕнчин хуçалăхĕ хăйне мĕн кирлине пĕтĕмпе пекех, тĕп таварсене вара социализм тĕнчинче тăракан çĕршывсене халĕ мĕн чухлĕ кирлĕ—çавăн чухлĕ туса кăларать. Тĕрĕслесе пăхнă хыççăн çапла пулса тухать: сăмахран, хĕвеланăçĕнчи çĕршывсем, Китайпа сыхăнса суту-илу тума чарса, хăйсене хăйсем алли-урипех тăлласа лартрĕç, Китая индустриализацилес пысăк ĕç тулашĕнче тăрса юлчĕç, çак ĕçе хутшăнни вара вĕсенчен хăшпĕрне пурнĕрех пулакан кризис тапхăрĕнче производствăна чакарассинчен хăтăлма май панă пулĕччĕ.

Эпир çапла шутлатпăр: суту-илусĕр мирлĕн çирĕп килĕштерсе пурăнма çук, суту-илу вăл тĕнчере икĕ рынок пулса тăнă хыççăн та килĕштерсе пурăнассин лайăх никĕсĕ пулса тăрать. Тĕнчере икĕ рынок—социализмла тата капитализмла рыноксем—пурри вăл тĕнчери мĕнпур çĕршывсем хушшинче пĕр-пĕриншĕн усăллă суту-илу тумалла марри пĕлтермест, пачах урăхла, çавăн пек суту-илĕве вăйлатма кирлине пĕлтерет. Икĕ тĕнче пĕр-пĕрипе килĕштерсе пурăнасси енчен илсен те, çавăн пекех тата практикăлла ĕçре те, хуçалăхла ĕçре те çак ыйтăва тĕрĕс ăнланни принципла пĕлтерĕшĕ пысăк.

Эпир çакна шута илетпĕр: эпир капитализмла çĕршывсемпе сыхăнса суту-илу туни икĕ енĕшĕн те усăллă тата унăн малалла аталанса пыма объективлă майсем пур. Ку вăл общество ĕçлевне пĕр-пĕрин хушшинче валеçме кирлинчен, хăшпĕр йышши продукцие мĕнпур çĕршывсенче туса тăни усă пĕр пек памани çинчен калакан паллă положенирен тухса тăрать. Пĕр çĕршывра пĕр йышши япаласене, тепĕр çĕршывра—урăх йышшисене туса кăларма çăмăлрах, уйрăм отраслĕсен аталанăвĕн шайĕ пĕр пек мар, рабочи класăн хăнăхăвĕсем, производство традицийĕсем влияни параççĕ тата ытти те. Çак енĕпе илсен, тĕнчери суту-илу вăл халăхсем хушшинче ĕçлеве ытларах та ытларах усăллă валеçнине кăтартса паракан пулнă, вăл халĕ те çавнах кăтартса парать.

Уйрăм çĕршывсенче социализмла революци мирлĕ çулпа аталанса пыма пултарасси çинчен

Юлташсем! Центральнăй Комитетăн отчетлă докладĕнче хускатнă теорилле ыйтусенчен чи çивĕччи тата чи кирли вăл çак ыйту пулать: яланах, мĕнпур çĕршывсенче тата пур условисенче те социализмла революцие пурнĕрех хĕçпăшаллă восстани ирттернипе тумалла-и е революци мирлĕн те аталанма пултарать?

Социализмла революци яланах юнлă граждан вăрçипе çыхăнса тăрать, тесе саракан шухăш тĕрĕс-и?

Çак ыйтусем питĕ кирлĕ, мĕншĕн тесен капитализмăн идеологĕсемпе пропагандисчĕсем коммунистсене вĕсем юн тăкассишĕн çунакан, яланах тата пур çĕрте те вăйпа ирĕксĕрлеме тăрăшакан, кирек мĕнле пулсан та граждан вăрçи пуçласа ярассишĕн тăрăшакан çынсем пулнă пек сăнласа кăтартаççĕ. Çакна пурне те вĕсем пролетариат диктатуришĕн паллă, коммунизмшăн кĕрешнĕ чухне пурнĕрех пулакан идейăсем тесе пĕлтереççĕ. Çакăнпа усă курса вĕсем социализм идейисем патне стихийăлла тата ăнлануллăн туртăнакан халăх массисене хăратса тăма, халăхсене шиклентерсе ўкерме хăтланнă, халĕ те хăтланаççĕ.

Çак ыйтусем çине эпир мĕнле пăхатпăр-ха? Çак ыйтусем çине Хрущев юлташăн докладĕнче уççăн ответ панă.

Паллă ĕнтĕ, пĕрремĕш тĕнче вăрçинчен большевиксем Российăра революци çĕнтерĕвĕ хĕçпăшаллă восстани урлă пулать тесе шутланă. Пĕрремĕш тĕнче вăрçи хĕрсе пынă вăхăтра большевиксем империализмла вăрçăран граждан вăрçине куçасси çинчен лозунг кăларса тăратнă. Пирĕн позици тĕрĕс те пурнăçлă пулнă, мĕншĕн тесен империализмла вăрçăран граждан вăрçине куçни вăл тĕнче вăрçине чарса лартмалли, халăхсем валли мирпе ирĕклĕх туса хумалли пĕртен-пĕр тĕрĕс май пулнă.

Февральти революцие пула Российăри ĕçсыннисем демократилле ирĕклĕхсем çĕнсе илнĕ, уй пек ирĕклĕхсем çав вăхăтра чи демократилле çĕршыв шутланнă Пĕрлешўллĕ Штатсенче те пулман. Лару-тăру улшăннине шута илсе, Ленин хăйĕн чаплă Апрельти тезисĕсенче рабочи класс влаçа хăйĕн аллине илессипе тата социализмла революци тăвассине мирлĕ майпа, Советсенче ытларахăша çĕнсе илнипе пурнăçласси çинчен лозунг кăларса тăратнă.

1917 çулхи июльти событисем хыççăн çеç, Вăхăтлăх правительство Петроград урамĕсенче рабочисен мирлĕ демонстрацине хутшăннă çынсен юнне тăкнă хыççăн, революци мирлĕн аталанасси çинчен калакан лозунга пăрахăçланă, мĕншĕн тесен лару-тăру улшăннă. Корнилов кавăрне хатĕрлекен буржуази вăйпа тăнние хирĕç вăйпа [illegible] тата восстани туса влаçа илмелле пулнă.

Çăннипе илсен вара Октябрьти переворот мирлĕн тенĕ пекех пулса иртнĕ, мĕншĕн тесен çав вăхăт тĕлне Советсен съездĕнчи тата нумай Советсенчи çынсен ытларахăшĕ революцилле шухăш-кăмăллă пулнă. Ку вăл нумай юн тăкмасăрах влаçа Советсен аллине илме май панă.

Октябрь хыççăн та Ленинпа большевиксем граждан вăрçи пуçлама, вăйпа усă курма ĕмĕтменен. Çук, Парти Российăна мирлĕн аталантармалли çул-йĕре тўрех палăртнă. Унтан та ытларах, Ленин хуçалăх енĕпе Российăри тата ют çĕршывсенчи капиталистсемпе, Совет влаçĕ контроллесе тăнипе ĕçлеме кăмăл тăвакансемпе килĕшў тума чĕннĕ. Вăл ют çĕршыв капиталисчĕсене концесси парасси çинчен тата государствăлла-капитализмла предприятисем тытасси çинчен сĕнў кăларса тăратнă.

Пирĕн халăха çав тери нумай асап куçнĕ граждан вăрçи мĕнле пуçланнă-ха?

Пĕтĕм тĕнчешĕн çакă паллă: граждан вăрçине пуçлакан вĕсем империализмла державăсем пулнă, юнлă граждан вăрçине революци мар, контрреволюци пуçланă, ăна большевиксен ирĕкĕпе мар, пачах урăхла, пирĕн ирĕке хирĕç пуçланă.

Çўлте каланинчен мĕнле выводсем тума пулать-ха? Ленин хăçан, хăш хутĕнче тĕрĕс каланă?

Вăл пĕрремĕш тĕнче вăрçинчен тата вăрçă тапхăрĕнче хĕçпăшаллă восстани тума чĕннĕ тата империализмла вăрçăран граждан вăрçи туса хума требовани лартнă чухне-и? Е Февральти революци хыççăн малтанхи уйăхсенче революцин мирлĕ аталанăвĕ çинчен лозунг кăларса тăратнă чухне? Е июльти событисем хыççăн вăл каллех хĕçпăшаллă восстани çинчен лозунг кăларса тăратсан?

Хăçан вăл тĕрĕс каланă, хăш хутĕнче? Ответ пĕрре кăна пулма пултарать — Ленин пур чухне те тĕрĕс каланă.

Пур чухне те Ленин догмăна пăхăнман, вăйне çухатнă лозунгсем хыççăн кайман, пурнăç требованийĕсене шута илнĕ, çав требованисем вара улшăнмасăр тăма пултараймасçĕ. Кун йĕркинчи лозунгсене Ленин класс вăйĕсен чăн-чăн шайлашăвне тĕрĕс шута илсе, çав шайлашу малашне мĕнле аталанса пырассине тарăн ăнланса палăртнă. Марксист çавăн пек, тата çавăн пек кăна, тума тивĕçлĕ, унсăрăн лозунгсем пролетарилле партие движение ертсе пыма чăрмантаракан вилĕ догмăсем пулса тăраççĕ. Ленин çакна яланах асра тытнă тата çакна палăртнă: «кирек мĕнле лозунг та кивелсе, ирĕксĕрпе тухма пултарать» (Соч., 28 т., 203 стр.).

Çавăн пек пулса пынă ĕçсем пирĕн çĕршывра. Принцип енчен илсен, Маркс, Энгельс тата Ленин çак ыйту çине ытти çĕршывсем тĕлĕшпе те çавăн пекех пăхнă—вĕсем яланах çакна палăртнă: пурте аталану тапхăрĕнчен, класс вăйĕсен шайлашăвĕнчен, пулса тăракан конкретлă лару-тăруран килет, тенĕ.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче Маркс çапла шутланă: Европăра кирек мĕнле чăн-чăн халăх революцийĕ валли малтанлăха кирлĕ условие вăл «государствăн бюрократла-çар машинине çĕмĕресси» пулать. Вăл Англире тата океан леш енчи çĕршывсенче кăна урăхла пулма пултарать тесе шутланă, вĕсенче рабочи класс çав вăхăтра влаçа мирлĕ майпа, парламентри ытларахăшне хăйĕн енне çавăрнипе, илме пултарнă. Амстердамри митингра 1872 çулта Маркс влаçа çĕнсе илесси çинчен çапла каланă:

«...çак тĕллев патне яланах пĕр пек çулсем илсе пыраççĕ, тесе эпир нихçан та çирĕплетсе каламан.

Уйрăм çĕршывсен учрежденийĕсене, йăлисемпе традицийĕсене шута илме кирлине эпир пĕлетпĕр: эпир Америка, Англи пек çĕршывсем пуррине те тунмастпăр, эпĕ сирĕн учрежденисене лайăхрах пĕлнĕ пулсан, çавсен çумне Голландие те хушнă пулăттăм, çав çĕршывсенчи рабочисем хăйсен тĕллевне мирлĕ майсемпе пурнăçлама пултараççĕ.

Анчах та ку çавăн пек пулсан, эпир тата çакна йышăнма тивĕçлĕ: континент çинчи çĕршывсенчен нумайăшĕнче пирĕн революцин рычагĕ вăй пулса тăма тивĕçлĕ, ĕçлев татăклăнах пуçпулса тăмалла пултăр тесен, эпир паллă вăхăтра усă курмалли хатĕр вăл шăпах вăй пулса тăрать те ĕнтĕ» (К. Маркспа Ф. Энгельс. Соч., 1-мĕш изд., 13 т., II пайĕ, 669 стр.).

Маркс тĕрлĕ çĕршывсенче революци аталанмалли çулсене çапла ăнланнă.

1917 çулта Ленин çапла çырнă: монополилле капитализмăн çĕнĕ лару-тăрăвĕнче, Англипе США-ра полицилле-бюрократла аппарат ўснĕ май, Маркс вĕсене çавăн пек уйăрса калани пăрахăçа тухать. Ленин Каутскипе ытти ренегатсене хытă критикленĕ, вĕсем Маркс çўлтерех каланине хўтĕлеме, «мирлĕ çула» ытлашши ўстерме хăтланнă, çав «мирлĕ çула» вĕсем хăйсем еврĕлĕ, реформистла ăнланнă, мĕнпур çĕршывсемшĕн тата аталанăвăн мĕнпур тапхăрĕсемшĕн ăна принцип вырăнне хума тата пролетариата влаçшăн пыракан революцилле кĕрешўрен пăрса яма хăтланнă.

Çапла ĕнтĕ, власть çĕнсе илмелли меслет тĕрлĕ çĕршывсемшĕн, тĕрлĕ вăхăтсенче, тĕнчери тĕрлĕ лару-тăрура пĕр пек пулма пултараймасть. Пурте класс вăйĕсен конкретлă шайлашăвĕнчен, рабочи класпа унăн тăшманĕ мĕн таран организованнăрах пулнинчен, рабочи класс союзникĕсене, чи малтанах, хресченсене хăйĕн енне çавăрма пĕлнинчен килет; кунта уйрăм çĕршывсен учрежденийĕсене, йăлисемпе традицийĕсене те шута илес пулать.

Çакна вăл Ленин çакăн çинчен асăрхаттарнă:

«Маркс хăйне — социализмла революции пулас деятелĕсене те — переворотăн формисем, майĕсем, меслечĕсем тĕлĕшпе çыхса хуман, уй чухне мĕн чухлĕ çĕнĕ проблемăсем тухса тăрассине, переворот пулнă вăхăтра пĕтĕм лару-тăру улшăнассине, переворот вăхăтĕнче лару-тăру часчасах тата вăйлăн улшăнассине вăл лайăх ăнланнă» (Соч., 32 т., 316 стр.).

Ленин пролетариатăн революцилле кĕрешўри тактика ыйтăвĕсем çине çапла пăхнă ĕнтĕ.

Историре ĕç çапла пулса тăнă, тесе шутланă Маркспа Ленин, ĕçе татса паракан çĕршывсенчен ытларахăшĕн пролетариатăн влаçа çĕнсе илмелли тĕп çул-йĕр вăл хĕçпăшаллă восстани пулать, мирлĕ çул-йĕре вĕсем ĕçсыннисемшĕн хăшпĕр чухне пулма пултаракан лайăх çул-йĕр тесе шутланă, çавăн пек мирлĕ çул-йĕр пулма пултарассине нихçан та шута илмесĕр тăман. Ленин яланах çакна палăртнă: «рабочи класс, паллах, влаçа хăйĕн аллине мирлĕ майпа илессипе маларах хунă пулĕччĕ» (Соч., 4 т., 254 стр.).

Кунта Ленин çакăн пек шутланине палăртни питĕ кирлĕ: пролетариатăн вăйпа ирĕксĕрлеме тивнĕ чухне те революцин тĕп, яланхи свойстви тата унăн çĕнтерĕвĕсен условийĕ вăл аркатуллă ĕç мар, организацилле, пултаруллă ĕç пулса тăрать.

Я. М. Свердлова асăнса каланă сăмахра Ленин çакна палăртнă:

«Иккĕленмелли çук, çак енсĕр — революцилле вăйпа ирĕксĕрлемесĕр — пролетариат çĕнтерме пултарайман пулĕччĕ. Анчах çакăн пирки те иккĕленў пулма пултараймасть: революци аталанăвĕн паллă тапхăрĕсенче çеç, паллă тата уйрăм условисем пур чухне çеç революцилле вăйпа ирĕксĕрлени революцин кирлĕ те законлă меслечĕ пулнă, çак революцин тарăнрах, яланхи свойстви тата революцие çĕнтерме кирлĕ условие вара вăл пролетарилле массăсене организацилесси, ĕçсыннисене организацилесси пулнă тата çавах юлать. Миллионшар ĕçсыннисене çакăн пек организацилени ĕнтĕ революцин чи лайăх условийĕсем, революци çĕнтерĕвĕн чи тарăн çăлкуçĕ пур» (Соч., 29 т., 70 стр.).

Ленин пурăннă вăхăтранпа тĕнчере лару-тăру нумай улшăнчĕ. Çакă вара пирĕн Центральнăй Комитета çав марксистла, ленинла принципла позицисем енчен çĕнĕ лару-тăрура тĕрлĕрен çĕршывсем социализма куçса пымалли формăсем çинчен тăракан ыйтăва çĕнĕлле лартма май парать.

Тĕнчери лару-тăру тĕпрен улшăннин питĕ паллă факторĕ вăл социализмăн, канатлă лагерĕ сураллни, ўссе тĕреклени пулать. Совет Союзĕнче социализмла общество туса хунă, социализм строительствин çулĕпе аслă Китай, халăх демократи çĕршывĕсем хăвăрт малалла пыраççĕ. Тĕнчери социализмла система йĕркеленчĕ, тĕреклетнĕ, аталанса пырать, капитализмăн тĕнчери системи вара кризиса лекнĕ, вăл вăйсăрланнă, пĕр позици хыççăн теприне çухатать.

Маларах капитализмăн питĕ паллă резервĕ пулса тăнă колониалле система ытларах та ытларах арканать. Инди, Бирма, Индонези, Египет халăхĕсем ирĕклĕн аталанмалли çул çине тăчĕç; Азири, Африкăри, Латинла Америкăри колониалле тата пăхăнса тăракан çĕршывсенчи мĕнпур халăхсем ирĕклĕх тата пĕтĕмĕшпе никама пăхăнманлăх туса хума тăрăшаççĕ. Капитализм çĕршывĕсенчи рабочи класăн организациллĕхĕпе ăнлануллăхĕ ўсрĕ.

Кучухнехи тапхăрти революцин çулĕсем çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухнă чухне эпир те халĕ, хăйсен вăхăчĕшĕн Маркспа Ленин тунă пекех, кашни уйрăм çĕршывра тата пĕтĕм тĕнчере класс вăйĕсем мĕнле шайлашса тăнине тĕрĕс шута илме тивĕçлĕ. Кашниншĕнех ăнланмалла ĕнтĕ, пирĕн вăхăтра пĕр çĕршыв та уйрăммăн, ытти çĕршывсем енчен паллă влияни илмесĕр, аталанма пултараймасть.

Ленин та çакна малтанах курса тăнă: буржуалла пĕчĕк çĕршывра, унпа юнашар социализмла çĕршывсем пулсан, социализма куçасси мирлĕ майпа пулса иртме пултарать. Ленин пĕр, уйрăм çĕршыври класс вăйĕсен шайлашăвне кăна мар, кўршĕллĕ çĕршывсенче социализм çĕнтернĕ çĕршывсем пулнине те шута илме кирли çинчен каланă.

Çавна май Центральнăй Комитетăн отчетлă докладĕнче çакăн пек вывод тунă: кучухнехи условисенче уйрăм çĕршывсемшĕн социализм патне мирлĕ çулпа куçмалли реальнăй май палăрать. Урăхла каласан, çĕршыври класс вăйĕсен шайлашăвне пула тата çўлте каласа панă пĕтĕмĕшле ситуаци лайăх пулнă май, рабочи класс уйрăм çĕршывсенче, хресченсемпе союзлă пулса, хăй ертсе пынипе халăхăн чи пысăк пайне пĕрлештерме тата влаçа мирлĕ майпа, хĕçпăшаллă восстанисĕр, граждан вăрçисĕр, парламент учрежденийĕсемпе усă курса, хăйĕн аллине илме пултарать. Паллах, революци мирлĕ çулпа аталанасси рабочи класăн вăйĕ, организациллĕхĕ тата класла ăнлануллăхĕ пур чухне кăна пулма пултарать.

Ытти чухне, буржуазин вăйлă çарпа полици машини пур чухне, буржуази пролетариата хăй пуçпулса тăрассине хўтĕлемешкĕн хĕçпăшалпа кĕрешмелле тăватех, пролетариатăн çав кĕрешĕве малтанах хатĕр пулмалла.

Центральнăй Комитет ыйтăва тĕрĕс лартнине революцилле марксизм-ленинизмăн пурнăç çирĕплетсе панă теорилле положенийĕсем ĕнентереççĕ. Ленин хыççăн вунă çĕршывра ытла социализмла революци çĕнтерчĕ. Çакă вăл мĕнле пулса иртрĕ-ха?

(Малалли 3-мĕш страницăра).

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН XX СЪЕЗЧĔ

А. И. Микоян юлташ сăмахĕ

(Малалли).

Китая илер. Çак аслă çĕршывра вуншар çулсем хушши граждан вăрçи пычĕ. Кунта революцилле çарсем нумай вăхăт хушши ют çĕршыв империалисчĕсене хирĕç тата помещиксемпе компрадорла буржуазин контрреволюцилле вăйĕсене хирĕç йывăррăн, юн юхтарса кĕрешнĕ. Пролетариат тата унăн коммунистсен партийĕ, ертсе пыракан вырăна йышăнса, феодализма тата империализма хирĕçле революцире хĕçпăшаллă кĕрешÿпе çĕнтересе, социализмла улшăнусем патне мирлĕн куçма май туса хучĕç.

Ленинизм Китайри миллионшар чи лайăх çынсен ăс-тăнĕпе чĕрине кĕрсе вырнаçрĕ. Китай халăхне социализм патне пымалли çула кăтартса парса, ленинизм Китай условийĕсенче те чечекленчĕ тата Китайри аслă революцин опычĕпе пуйланчĕ. (Алă çупаççĕ).

Китайри коммунистсене Хĕвелтухăçĕнчи çав аслă çĕршывра социализм тăвас ĕçре пĕтĕмĕшпех çитĕнÿ тума ырă сунар. (Алă çупаççĕ).

Югославире революци хăйне евĕрлĕ аталанса пычĕ. Фашистла Германи Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçласан, Югославири Компарти фашизм пусмăрне хирĕçле восстание ертсе пычĕ; Югославири буржуазин пĕр пайĕ, фашизма хирĕç пыракан кĕрешÿрен пăрăнса, урăх çĕршывсене тухса кайрĕ, тепĕр пайĕ фашистсемпе пĕрлешрĕ, оккупаци режимне пулăшаканĕ пулса тăчĕ. Çавăнпа ĕнтĕ Югославире фашизма хирĕç пыракан партизанла вăрçă Югославие сутнă буржуазипе помещиксене хирĕç пынă граждан вăрçипе пĕрлешсе кайнă.

Югославири социализм тăвас тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçлекен коммунистсен партийĕпе тата Югослави халăхĕпе эпир тытакан туслăхпа тăванла союза çирĕплетсе пынине пула Югославири революци çĕнтерме пултарчĕ. (Алă çупаççĕ).

Чехословакире революци урăхла пулса пынă. Вăрçă хыççăн пулса тăнă лайăх ситуацие пула Чехословакире социализмла революци мирлĕ майпа пулса иртнĕ; коммунистсем, ĕçсыннисен хăйсене çывăх партийĕсемпе кăна мар, пĕтĕмĕшле наци фронтне пулăшса тăнă буржуазла партисемпе те союз туса, влаçа илнĕ. Чехословаки халăхĕ революцин мирлĕ аталанăвĕн çулĕ çинче çĕнтерчĕ.

Болгарири, Румынири, Венгрири, Польшăри тата ытти халăх демократи çĕршывĕсенчи рабочи класс хăйне евĕрлĕ, анчах çавнашкалах граждан вăрçисĕр социализмла революцире çĕнтерÿ турĕ.

Çапла ĕнтĕ, истори коммунизмăн учителĕсем тĕрĕс вĕрентнине çак тĕрлĕ майпа çирĕплетсе пачĕ, вĕсем хĕçпăшаллă восстанисĕр пуçне революци аталанăвĕн мирлĕ çулĕ те пуррине палăртнах курса тăнă.

Капитализмла çĕршывсенчи тăванла коммунистсен партийĕсен пĕлÿсен пысăк çăлкуçĕ—марксизм-ленинизм теорийĕ, хăйсен практикăлла опычĕн пуян шкулĕ, пирĕн çĕршыври, Китайри тата ытти халăх демократи çĕршывĕсенчи историлле çĕнтерÿсен урокĕсем пур.

Мĕскĕн теоретиксем, начетчиксем е политикăра писсех çитмен çынсем çавăн пек ыйтма пултараççĕ: ыйтăва кун пек лартнă чухне марксизмпа реформизм хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур, кунта марксизмăн ревизионисчĕсем суйласа илнĕ çул çине куçса кайни çук-и?

Реформистсемпе ревизионистсем яланах, ĕлĕк те, халĕ те, рабочи класăн пĕчĕк реформăсемшĕн çеç, капитала ĕçлевшĕн кăштах чакарассишĕн кăна кĕрешмелле тесе, капитализм вăхăтĕнче рабочисен пурнăç условийĕсене кăштах çеç лайăхлатассишĕн, капитализмла строй пуçпулса тăнине çаплипех хăварассишĕн тăрăшнă, тăрăшаççĕ те. Вĕсем, чăннипе илсен, капитализмăн апологечĕсем пулнă, çаплах пулса юлаççĕ, вĕсем революционерсем мар, эволюционерсем, вĕсем революципе, влаçа ĕçсыннисем хăйсен аллине илессипе килĕшмеççĕ, пĕчĕк, вак-тĕвекпе «çĕнсе илнисемпе» нумай çулсем хушшинче хăçан та пулин социализм патне çитме пулать тесе шутлаççĕ. Тен, вĕсенчен хăшпĕрисем ун пек шутламаççĕ те пулĕ, анчах халăха çавăн майлă улталаççĕ. (Залра хускалса илеççĕ).

Çавăн пек фактсем паллă: социалистсен хăшпĕр партийĕсем парламентсенче ытларахăш вырăнсене йышăнма пултарнă, чылай çĕршывсенче социалистла правительствăсем те пулнă, халĕ те пур. Анчах кунта та рабочисемшĕн пĕчĕк ĕçсем тунипех çырлахаççĕ, нимĕнле социализм та тумаççĕ. Обществăна государство енчен ертсе пырассине рабочи класăн аллине илни кирлĕ, социализмшăн кĕрешме рабочи класс организаци тĕлĕшĕнчен кăна мар, политика тĕлĕшĕнчен те, теори тĕлĕшĕнчен те хатĕр пулмалла, унăн капиталистсен сĕтелĕ çинчи тĕпренчĕксемпе кăна çырлахмалла мар, ытларахăшне хăйĕн çине çавăрса, влаçа хăйĕн аллине илмелле тата производствăн тĕп хатĕрĕсем уйрăм çынсен харпăрлăхĕ пулса тăнине пĕтермелле.

Историлле материализм çапла вĕрентет: капитализм вырăнне социализм йышăнни, класлă общество вырăнне классăр общество туса хуни революцилле сикĕм пулса тăрать. Çавăн пек улшăну вăл, чăннипе илсен, пĕр обществăлла строй вырăнне революцилле майпа тепĕр обществăлла строй туса хуни пулать. Çавăнпа та кирек хăçан та капитализмран социализма куçни, обществăлла хутшăнусенчи кирек мĕнле переворот та революци, сиксерех е сиксерех мар, çапах та революци пулса тăрать, ăна пур халăхсем те тăвĕç. Влаçа халăх аллине илни, производство хатĕрĕсем уйрăм çынсен харпăрлăхĕнчен обществăлла харпăрлăх пулса тăни вăл историри чи пысăк та аслă переворот пулса тăрать.

Çавăнпа та ĕнтĕ уйрăм çĕршывсенче революци мирлĕ çулпа аталанма пултарасси çинчен тăракан ыйтăва реформизмпа ăмăртантарма юрамасть. Çакна астăвас пулать: революци—мирлĕ е мирлĕ мар пулсан та — яланах революци пулать, реформизм вара яланах усăсăр пĕр вырăнта таптатса тăни пулса юлать. Çавăнпа та, çĕнтерес тесен, рабочи класс ыйăнма пĕлмесĕр реформизмпа тата хăйĕн ретĕсенче реформизм суратакан иллюзисемпе кĕрешме тивĕçлĕ.

Вăрçă пурпĕрех пулмалла-ши?

Вăрçă пурпĕрех пуласси е пулас марри çинчен тата икĕ система пĕр вăхăтра мирлĕ тытăнса тăрасси çинчен Центральнăй Комитетăн отчетĕнче лартнă ыйту çине тивĕçлипе пăхни кирлĕ.

Рынoксемшĕн, колонисене çĕнĕрен валеçсе тухассишĕн пĕр-пĕрипе конкуренци тăвакан тата кĕрешекен государствăсем хушшинче пулакан конфликтсемпе вăрçăсем империализмран хăйĕнчен тухса тăраççĕ. Ленинизм çапла вĕрентни паллă ĕнтĕ. Империализм пурăнать пулсан, конфликтсем пулаççех, вăрçă тухас хăрушлăх пĕтмест.

Кучухнехи условисенче империализмла государствăсем е империализмла государствăсен ушкăнĕсем хушшинче вăрçă тухма пултарать-и? Çапла, пултарать.

Иккĕмĕш ыйту. Империализмла государствăсем социализм çĕршывĕсем çине тапăнас хăрушлăх пур-и? Иккĕленмелли çук, çавăн пек хăрушлăх пур. Халлĕхе, социализм пĕтĕм тĕнчере капитализмран пысăкрах вырăн йышăнман чухне, çавăн пек хăрушлăх пулатех.

Çапла вара çавăн пек ыйту тухса тăрать: çĕнĕ вăрçă пурпĕрех пулмалла-ши, урăхла каласан, вăрçă тухассине чарса лартма май пур-ши е çук-и? Çак ыйту пирки Центральнăй Комитетăн отчетĕнче уççăн каласа панă:

—Империализм пурăнать пулсан, вăрçă вăрçмалли экономикăлла никĕс те упранать, тесе ленинизм вĕрентни çĕнĕ условисемшĕн те тĕрĕс пулса тăрать. Анчах вăрçă пурпĕрех пулать теме çук. Ăна кучухнехи аталану тапхăрĕнче тĕнчери вăйсен шайлашăвĕнчен килекен историлле паллă условисем кăтартса параççĕ. Çавăн пек условисем иккĕмĕш тĕнче вăрçи хыççăн пулса тăчĕç тата çирĕпленчĕç.

Халĕ Совет Союзĕ те, халăх Китайĕ те тата халăх демократиллĕ ытти çĕршывсем те вăрçа хирĕç, миршĕн тăраççĕ. Вĕсем хытă тăраççĕ. Ку вăл—питĕ пысăк вăй, ăна шута илмесĕр тăма çук. Колониалла пусмăртан хăтăлнă Азири тата Африкăри халăхсем тата пысăк çĕршыв—Инди вăрçа хирĕç, миршĕн тăраççĕ. Вĕсем нумай пулмасть ют çĕршывсем пуçпулса тăнинчен хăтăлнă, вĕсем çĕнĕ вăрçă тухсан каллех колониализм пусмăрĕ таврăнасран тĕрĕс шикленеççĕ. Вĕсем харпăр хăй вăйĕпе ирĕклĕн аталанасшăн, вĕсене вăрçă кирлĕ мар, вĕсене чечекленме çул паракан мир кирлĕ. Çак ĕçре, миршĕн тăрас ĕçре вĕсем пирĕн союзниксем.

Европăри чылай çĕршывсенче, Францинс Итали пек çĕршывсенче, халăх хушшинче пысăк влиянипе усă куракан вăйлă рабочи класс пур, вăл миршĕн, вăрçа хирĕç тăрать.

Ытти çĕршывсенчи рабочи класс, хресченсем, ĕçсыннисем, интеллигенция чылай пысăк пайĕ, буржуазин пĕр пайĕ çĕнĕ вăрçа йăмăльмаççĕ, вĕсем вăрçăн аркатакан хăрушлă вăйне пĕлеççĕ, иртнĕ вăрçăн хĕн-хурне вĕсем те курнă. Çакă вăл—паллă та питĕ паха фактор.

Çав вăхăтрах, калăпăр, США-ри пек империализмла пысăк монополисем те пур, вĕсем вăрçа пула нимĕнле сухату та тÿссе курман, пачах урăхла, вĕсемшĕн вăл чи пысăк услам илмелли çăлкуç пулса тăнă, çавăнпа вĕсем каллех, Америка халăхĕ вăрçа хирĕç пулин те, çĕнĕ вăрçă чĕртсе ярасшăн. Халĕ вĕсене общественносăн шухăш-кăмăлĕсĕр пуçне, социализм çĕршывĕсен пысăк çар вăйĕсемсĕр пуçне, тата тепĕр паха сăлтав чарса тăрать, вăл—американецсен çеç мар, Совет Союзĕнче те атомлă тата водородлă бомбăсем пурри, çав бомбăсене çĕр чăмăрĕн кирек хăш вырăнне те самолетсемпе е ракетăсем илсе çитермелли майсем пурри.

Никăш вăрçăра та Америка çĕрĕ çине, унти хуласене фабрикăсем çине урăх çĕршывăн пĕр бомби те, пĕр снарячĕ те ÿкмен, ÿкме те пултарайман, мĕншĕн тесен ун чухне çавăн пек тума техника та, майсем те пулман. Халĕ ĕнтĕ çавăн пек тума майсем пур. Америка агресси пуçарса ярас-мĕн пулсан, ăна ответленĕ май водородлă бомбăсем Америкăри хуласем çине те ÿкме пултараççĕ, Америка империалисчĕсем вара çав бомбăсенчен хÿтĕленсе юлас çук, хăйсен фабрикисене хÿтĕлесе хăварас çук. Ку хутра вăрçă вĕсемшĕн пуйăмалли çăлкуç пулса тăраймĕ, вăрçă тухас-мĕн пулсан, вĕсем аркату тата тĕп пулассине çеç курма пултарĕç.

Эпир çапла шутлатпăр: кам та пулин водородлă е атомлă бомба пăрахма хăтланса пăхсан, этемлĕхĕн чи лайăх çыннисем цивилизацие пĕтме парас çук, вĕсем часах пĕрлешĕç, агрессорсене лăплантаракан кĕпесем тăхăнтарĕç, малалла вăрçă пуласса те, çавăнпа пĕрлех капитализма хăйне те пĕтерсе курĕç. (Нумайччен алă çупаççĕ).

Водородлă е атомлă бомбăпа усă курса вăрçни пысăк аркатусем тума пултарать, анчах вăл этемлĕхе е унăн цивилизацине пĕтересси патне илсе пыраймасть, вăл кивелсе çитнĕ тата усал шăршă кăларакан строя — империализм тапхăрĕнчи капитализма пĕтерсе хурать.

Çирĕп мир тума пулăшакан чи кирлĕ ĕçсем çаксем пулса тăраççĕ: хĕçпăшалсăрланни, водородлă тата атомлă бомбăсене пĕтерни, пĕр-пĕрне килĕштерсе мирлĕ пурăнни. Çавсемшĕн эпир кĕрешетпĕр те, малашне те кĕрешĕпĕр.

Анчах та халлĕхе, Пĕрлешÿллĕ Штатсем атомлă тата водородлă хĕçпăшала пĕтерессине хирĕç тăнă чухне, хĕçпăшалсăрланассине пурнăçа кĕртме май килмен чухне, пирĕн хамăрăн хĕçпăшалсене ирĕксĕрех тивĕçлĕ шайра тытса тăма тивет, вăл шута хăватлăран та хăватлă, наукăпа техникăн юлашки çитĕнĕвĕсемпе усă курса тунă кучухнехи хĕçпăшалсем те кĕреççĕ.

Социализм лагерĕ мĕн чухлĕ вăйлăрах, миршĕн пыракан тĕнчери юхăм çĕнтерÿ тăвас, агрессорсене вăрçă пуçласа яма парас мар шанчăклăх та çавăн чухлĕ пысăкрах пулĕ.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ Центральнăй Комитетăн отчетĕнче вăрçă пурпĕрех пуласси çинчен каламан. Халĕ истори çавăн пек тапхăра кĕчĕ: вăрçă тухас хăрушлăх пĕтмен тата вăл тухма пултарать пулин те, вăрçă тухассине чарса лартма паракан условисемпе майсем пулса тăчĕç, çавна пула вара, халăхсем пĕр чăрăнмасăр миршĕн, вăрçă тухас хăрушлăха хирĕç кĕрешеççĕ пулсан, агресси пуласран сыхăлăхлă пулсан, нумай вăхăтлăха мир туса хума кăна мар, çирĕп мир туса хума та условисемпе майсем пур.

Нумай вăхăтлăха мир тумалла тата пĕр-пĕрне нумай вăхăт хушши килĕштерсе пурăнмалла тенĕ май, хăшпĕрисем ыйтăва çапла лартаççĕ: çав нумай вăхăтлăха текен мирпе нумай вăхăт хушши пĕр-пĕрне килĕштерсе пурăнмалла тени хăçанччен пымалла-ши? Ку вăл законлă ыйту.

Кун пирки пирĕн тăшмансем çапла калаççĕ: эпир вăрçăшăн тăракан çынсем имĕш, вăрçă пуçарса коммунизма пĕтĕм тĕнчипе сарасшăн имĕш, анчах та, вĕсем калашле, халĕ эпир çавăн пек тума хатĕрленсе çитеймен, çавăнпа та эпир вăхăт çитиччен пĕр-пĕрпе мирлĕ пурăнасшăн имĕш, лайăх хатĕрленсе çитсен вара вĕсем çине хĕçпăшалпа тапăнса, коммунизм туса хуратпăр имĕш. Тăшмансем пире хирĕç кăларса тăратнă «теорилле концепцисем» çавăн пек ĕнтĕ. Ку вăл пирĕн политика пирки элеклени пулать. Коммунизмшăн вăрçă кирлĕ мар, вăл вăрçа хирĕç, коммунизм идейисем вăрçăсăр та çĕнтереççĕ! (Алă çупаççĕ).

Эпир вăрçă çине çавăн пек пăхни совет çыннисен гуманизмĕнчен, вĕсем ытти мĕнпур халăхсем çине туслă шухăш-кăмăлпа пăхнинчен кăна килмест. Хăвăрт хĕçпăшалланни тата çар ĕçĕ валли çынсен ăс-тăнĕпе материаллă вăйĕсене усăсăр пĕтерни коммунизм строительствин интересĕсемпе, халăхсен пурнăçне лайăхлатассишĕн кĕрешес ĕçпе пачах сыхăнса тăмаççĕ.

Совет влаçĕ çуралсанах унăн малтанхи декречĕ мир çинчен пулнă. В. И. Ленин, Совет правительствин пуçлăхĕ, ыйăнма пĕлмесĕр мир тума сĕннĕ, çĕршывсемпе пуринпе те дипломатилле çыхăнусем тата суту-илÿ хутшăнăвĕсем тума тăрăшнă.

Ленин çапла каланă: «Мире сыхлани пире никĕмрен те хаклă...» (Соч. 32 т. 94 стр.). «Российăри рабочисемпе хресченсем мир ырлăхне пуринчен ытларах хаклаççĕ...» (Соч. 33 т. 125 стр.). «Эпир пĕр çĕршыва уйăрса хăвармасăр мĕнпур çĕршывсемпе союзлă пулассишĕн». (Соч. 30 т., 341 стр.).

1920 çулти февральре Ленин çапла каланă: «Америка капиталисчĕсем пире пырса ан тивчĕр. Эпир те вĕсене тивес çук.» (Соч. 30 т., 340 стр.).

Ленин сăмахĕсем тата мир пирки вăл хушса хăварнисем пирĕншĕн пăсмалла мар таса сăмахсем пулса тăраççĕ. Вĕсене эпир темиçе хут çĕнĕрен те çĕнĕрен калама хатĕр (алă çупаççĕ), вĕсене пирĕн туссем лайăх пĕлеççĕ. Вĕсене пирĕн тăшмансем те, халăх кăмăлне тивĕçтерсе совет халăхĕпе çирĕп туслăх тума чăрмантаракансем те пĕлмелле пултăрччĕ, çав сăмахсене вĕсем тивĕçлĕ хак парса тĕрĕс ăнланса илччĕрччĕ.

Пире мир хамăр çĕршывра тата социализм çĕнтерни çĕршывсенче хăвăртрах коммунизм туса çитерме май парать. Вăрçă вăл, Отечественнăй вăрçăра пулнă пек, пирĕн хуçалăх аталанăвне чарса лартма çеç пултарать.

Коммунизм идейисем хăçан та пулин—хальтерех-и е каярахран-и — мĕнпур халăхсен чĕрисем патне çул тупса пĕтĕм тĕнчипех çĕнтерсе çирĕпленĕç.

Центральнăй Комитетăн отчетĕнче вăрçăпа мир çинчен тăракан ыйтăва марксистла-ленинла тĕрĕс сутатса пани вăл вăрçа хирĕç, миршĕн пыракан пĕтĕм тĕнчери кĕрешĕве общественносăн вăйне организацилес ĕçре историллĕ вырăн йышăнать тата вăл çынсен çав ырă кăмăллă ĕçне ытларах та ытларах вăйлатма пулăшать. (Алă çупаççĕ).

Идеологилле ĕçе—çĕнĕ пусăм

Малалла çавăн пекех пирĕн коммунистсен идеологи тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен тата хамăн хăшпĕр шухăшсене каласа парас килет.

Чăннипе каласан, идеологилле ĕç çитменлĕхсĕр пулса пынин айăпĕ юлашки çулсенче наукăлла тата идеологилле ĕç валли тивĕçлĕ условисем туса паманнинчен сахал мар килнĕ. Анчах çакă та паллă: пирĕн идеологилле фронт питĕ юлса пынишĕн çак фронтри работниксем хăйсем те айăплă.

Шел пулин те, юлашки вунпилĕк-çирĕм çул хушшинче пирĕн хамăр çĕршывăн шалти пурнăçĕнчи явленисене, çавăн пекех тĕнчери лару-тăрăва ăнланса илес тата ăнлантарса парас ĕçре Ленин вĕрентĕвĕн пысăк пуянлăхĕпе сахал, ытла та сахал усă курнă. Çакă вăл, паллах ĕнтĕ, Ленин идейисем кучухнехи лару-тăрăва ăнланса илме кивелнинчен е çителĕксĕр пулнинчен килмен.

Ленинизм империализм тата пролетарилле революцисен саманинче творчествăлла аталантарнă марксизм пулса тăрать, вăл хăйĕн пĕтĕм наукăлла-теорилле тата политикăлла вăйне, практикăри пĕлтерĕшне сыхласа хăварать, малашне те сыхласа хăварĕ.

Ленин общество аталанăвĕн закономерноçĕсем çинчен генилле каласа панисем хальхи тапхăрти нумай явленисене тĕрĕс ăнланмалли хаклăран та хаклă çăлкуç пулса тăраççĕ. Çук, Ленинсăр вĕсене ăнланма май çук, хальхи тĕнчери лару-тăрăва, империализм тапхăрĕнчи çĕрсе пыракан капитализм аталанăвĕн закономерноçĕсене, пролетарилле революцин малашлăхне тата унăн çĕнтерĕвне, социализм тата коммунизм тумалли çул-йĕрене Ленинсăр ăнланма май çук.

Ленинизмăн ĕмĕр-ĕмĕрех чĕрĕ вĕрентĕвĕпе усă курса, пирĕн парти, унăн Центральнăй Комитечĕ, ытти çĕршывсенчи коммунистсен партийĕсемпе рабочисен партийĕсем общество аталанăвĕн кучухнехи тапхăрти конкретлă событисемпе явленисене тишкерсе тухнă чухне çав вĕрентÿпе творчествăлла усă кураççĕ, çапла вара марксизм-ленинизма пуянлатаççĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн отчетлă докладĕнче капитализмăн кучухнехи лару-тăрăвне уççăн тишкерсе тухнă. Юлашки вăхăтра капитализм çĕршывĕсенче промышленность продукцийĕ туса кăларасси кăштах ÿснĕ. Анчах çак ÿсĕм вăл капитализм производствин хирĕçĕвĕсем малалла çивĕчленсе, унăн экономикăри тĕрексĕрлĕхĕ малалла вăйланса пынă условисенче пулса иртнĕ. Капитализм экономики питех те асаплăн аталанать, сасартăк экономикăлла кризиссем пулма пултараççĕ. Капитализм системи малалла вăйсăрланса пырать. Тĕнчери экономикăра капитализмăн удельнăй виси чакас, социализмăн удельнăй виси ÿсес процесс—пĕтĕм тĕнче историйĕнчи процесс—малалла пырать.

Пире пурсăмăра та капитализмăн кучухнехи лару-тăрăвĕ интереслентермесĕр тăма пултараймасть,—пĕтĕмĕшпех çĕрсе пынă тата пĕтĕмĕшле кризис вăхăтĕнче капитализм аталанма пултарать-и? Капитализм çĕршывĕсенче паян тата ыран техникăлла прогресс, производство ÿсĕмĕ пулма пултараççĕ-и?

Капитализм пачах малалла каймасть текен теори марксизм-ленинизмшăн ют теори пулса тăрать. Капитализмăн пĕтĕмĕшле кризисĕ капитализм çĕршывĕсенче производство ÿсĕмне тата техникăлла прогресса чарса лартать тенине тĕрĕс тесе шутлама юрамасть.

Сталин «СССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенире Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем, Англи тата Франци пирки калани кучухнехи капитализмăн экономикине тĕпчесе тухнă чухне пире пулăшма пултарĕ-ши тата вăл калани тĕрĕс-ши? Сталин çав произведенире тĕнчери рынок пайланнă хыççăн, «çав çĕршывсенче производство калăпăшĕ чакса пырĕ», тет. Çакăн пек çирĕплетсе калани кучухнехи капитализмăн кăткăс та хирĕçÿллĕ явленийĕсене тата нумай çĕршывсенче вăрçă хыççăнхи тапхăрта капитализмла производство мĕншĕн ÿснине ăнлантарса параймасть.

Центральнăй Комитетăн докладĕнче каланăччĕ ĕнтĕ, Ленин 1916 çулта империализм çинчен çырнă произведенире, империализмăн закономерноçĕсене генилле сутатса, çапла кăтартса панă: капитализм çĕрсе пыни производство хăвăрт ÿсме пултараймасть тенине пĕлтермест, империализм саманинче промышленносăн уйрăм отраслĕсем, уйрăм çĕршывсем пĕр еннелле е тепĕр еннелле ытларах е сахалрах вăйпа сулăнаççĕ.

Пур фактсем те Ленинăн çак шухăшĕсем нихăш енчен кивелнине те пĕлтермеççĕ. Сăмах майĕн çакна та палăртса хăварас пулать: тĕплĕн тишкерсе тухсан, «Экономикăлла проблемăсенчи» ытти хăшпĕр положенисене те пирĕн экономистсен тĕплĕн тĕпчесе пăхма тата марксизм-ленинизмăн вĕрентĕвĕ енчен критикăлла пăхса тухма кирлĕ курăнать.

Марксизм-ленинизмăн принципла шухăшĕсем пурте тĕрĕссине империализм аталанăвĕн кучухнехи тапхăрĕнчи тĕслĕхсем те лайăх çирĕплетсе параççĕ. Анчах çавăн пек пĕтĕмĕшле вăйн калани çителĕксĕр. Пирĕн хăçан, ăçта, мĕн таран тата вăл мĕнле пулса пынине конкретлăн тĕпчесе вĕренмелле.

Эпир капитализмăн кучухнехи тапхăрне тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе питĕ юлса пыратпăр, фактсемпе цыфрăсене тарăнăн тĕпчесе вĕренместпĕр, час-часах агитацире усă курас шутпа кризис çывхарса çитнине, ĕçсыннисем чухăнланса пынине кăтартакан уйрăм тĕслĕхсем илнипех çырлахатпăр, ытти çĕршывсен пурнăçĕнче пулса иртекен явленисене пур енчен те тата тĕплĕн хакламастпăр. Пирĕн экономистсем, Совет Союзĕн тата халăх демократи çĕршывĕсен экономикине час-часах çиелтен тишкереççĕ, тĕпне çитмеççĕ, тĕплĕ анализ туса пĕтĕмлетсе каласа памаççĕ, уйрăм çĕршывсен аталанăвĕн уйрăмлăхне сутатма тăрăшмаççĕ.

Тĕрĕссипе илсен, асăннă ыйтусене тĕплĕн татса парас тĕлĕшпе камăн ĕçлемелле-ха? Вăрçăччен пирĕн Тĕнчери хуçалăхпа тĕнчери политика институчĕ пурччĕ, ăна та пулин хупнă. Наукăсен академийĕнче пĕртен-пĕр экономика институчĕ пур, анчах вăл çителĕксĕр ĕçлет, вăл социализм çĕршывĕсен тата капитализм çĕршывĕсен экономикине тĕплĕн тĕпчесе вĕренес ĕçе тума вăй çитерейместь. Наукăсен академийĕнче тата тепĕр институт пур. Вăл Хĕвелтухăç ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлет. Анчах ун пирки çапла калама пулать: пирĕн вăхăтра пĕтĕм Хĕвелтухăçĕ вăранчĕ пулсан, асăннă институт паянхи кунччĕнех çывăрать. (Залра хускалса илеççĕ, кулаççĕ).

Кучухнехи тапхăр ыйтнă шая çĕклеме вăхăт çитмен-ши ăна?

Хĕвелтухăç енĕпе 139 çул хушши ĕçленĕ Мускаври института мĕншĕн хупнине те, çитменнине тата пирĕн çыхăнусем Хĕвелтухăçĕпе ÿссе аталаннă вăхăтра, Хĕвелтухăçĕпе экономикăлла, политикăлла тата культурăлла çыхăнусем сарăлса пынă май совет общественносăн интересĕ ÿснĕ вăхăтра, хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсен чĕлхине, экономикине, культурине пĕлекен çынсем нумай кирлĕ вăхăтра хупнине ăнланма хĕн.

Çакна асăрхамасăр хăварма çук: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче совет экономикине тĕпчесе вĕренекен наука учрежденийĕсем пĕр теçетке çурăран та ытларах, теççĕ. Вĕсем мĕнле тата мĕскер вĕренни çинче чарăнса тăмастăп, анчах унта Совет Союзĕн экономики аталаннине кăтартакан материалсене пухса тĕпчекен экономистсем нумайăн паллă.

Пирĕн экономистсен коллективĕ политикăлла экономи учебникне кăларнине, ун хыççăн ăна хушса çырса тепĕр хут кăларнине пысăк çитĕнÿ, тесе йышăнас пулать. Анчах учебникĕн капитализмăн кучухнехи тапхăрти аталанăвĕ çинчен, сăмахран, циклла тата вăхăтран вăхăта пулакан кризиссен характерĕ çинчен калакан пайĕсене, çавăн пекех тата социализмăн политикăлла экономийĕн ыйтăвĕсене малалла тарăнрах тĕпчесе тата çĕнетсе çырма кирли çинчен каламасăр хăварни тĕрĕс пулман пулĕччĕ.

Маркс генилле выводсем тăвас тĕллевпе мĕнпур çĕршывсен экономики çинчен, вăл шутра Россия çинчен, статистика материалĕсем мĕн тери нумай пухнине пурте пĕлеççĕ. Ленин Российăра капитализм аталанни çинчен тата империализм çинчен кĕнеке çырнă чухне çав вăхăтра пулнă питĕ çителĕксĕр, анчах питĕ кирлĕ статистика материалĕсене пухас тĕлĕшпе мĕн тери пысăк ĕçсем туни паллă.

Халĕ пирĕн статистика материалĕсем нихçанхинчен тата кирек хăш çĕршывринчен те нумайрах. Çав материалсене питĕ тĕплĕн тишкерсе тĕпчемесĕр тата пĕтĕçтермесĕр наукăлла-экономикăлла нимĕнле ĕç те пулма пултараймасть.

Шел пулин те, статистика материалĕсем Центральнăй Статистика управленийĕнче выртаççĕ, Старовский юлташ вĕсем патне яхăнне те ямасть. Экономистсем çав материалсене тишкерсе тухма май тупаймаççĕ, вĕсен ирĕксĕрех начетчиксем пек, кивелнĕ формулăсемпе даннăйсене темиçе хут калама тивет. Çакă вăл пирĕн экономистсен творчествăлла ĕçĕ курăнманнин сăлтавĕсенчен пĕри. (Алă çупаççĕ).

Статистика пĕлтерĕшĕ çинчен Ленин каланине аса илмесĕр иртсе кайма юрамасть. Ленин 1918 çул пуçламăшĕнче çапла çырнă:

«Капитализм обществинче статистика «хысна çыннисен» е уйрăм специалистсен аллинче çеç пулнă,—пирĕн ăна массăсем хушшине илсе каймалла, ăна ăнлантарса памалла...» тенĕ.

Шел пулин те, Ленин «хысна çыннисем» çинчен асăрхаттарни статистикăра ĕçлекен хăшпĕр çынсене пырса тивнĕнех туйăнать. Çав çынсен пуçĕсем кивĕ общество сĕрĕмĕнчен тасалса çитеймен-ха. (Залра хускалса илеççĕ).

Центральнăй Комитетăн отчетĕнче пирĕн пропаганда ĕçĕ çителĕксĕр пулса пыни çинчен уççăн каланă. Тĕп сăлтавсенчен пĕри вăл—марксизм-ленинизма, илсе пекех, парти историне Кĕске курс тăрăх çеç вĕренни. Çакă вăл, паллах, тĕрĕс мар. Марксизм-ленинизм идейисен пуянлăхĕ пирĕн парти историне сутатакан ансăр рамкăна, çитменнине тата унăн Кĕске курсĕн рамкине вырнаçса ларма пултараймасть. Çак тĕллевпе пĕлÿлĕх тĕлĕшпе пĕр пек шайра тăман юлташсем валли теорие сутатакан учебниксем ятарласа çырса кăларас пулать. Ку вăл пĕрремĕшĕнчен. Иккĕмĕшĕнчен, хальхи парти историйĕн Кĕске курсĕнче пирĕн партин юлашки çирĕм çула яхăн тапхăрĕнчи пурнăçне сутатман, çавăнпа та вăл пире çырлахтараймасть. Партин юлашки икĕ вунăçуллăхри историне çырса хатĕрлеменнине кирек мĕнле сăлтавпа та тÿрре кăларма çук.

Малалла. Пирĕн историксем пирĕн парти историйĕнче Совет тапхăрĕ вăхăтĕнче пулса иртнĕ фактсемпе событисене тата «Кĕске курсра» сутатнисене хаçатсен комплекчĕсем тăрăх çеç мар, архивсенче, историлле документсенче лайăххăн шырса пăхнă тата кирлĕ пек, тарăнăн тĕпчесе вĕреннĕ пулсан, вĕсем «Кĕске курсра» каласа панă нумай фактсемпе событисене лайăхрах, ленинизм вĕрентнĕ пек сутатса пама пултарнă пулĕччĕç.

Тепĕр ыйту. Октябрь хыççăн 40 çула яхăн пурăнатпăр пулин те, пирĕн Октябрьти революци тата Совет государстви историне, Совет Тăван çĕршывĕн нумай енлĕ пурнăçне, илемлетсе кăтартмасăр, тул енчен çеç мар, кĕскен те, тулли те сутатакан марксистла-ленинла учебник çуккине йĕркеллĕ ĕç теме пулать-и?

Тĕнчери пĕрремĕш социализмла пысăк государство çуралса аталаннине пур енчен те сутатакан учебник çырса кăларни теорипе политика тĕлĕшĕнчен мĕн тери пысăк вырăн йышăннă пулĕччĕ. Унăн пĕлтерĕшĕ пирĕн кадрсемшĕн, пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă çынсемшĕн мĕн тери пысăк пулнă пулĕччĕ! (Нумайччен алă çупаççĕ).

Партипе совет обществине наука енчен сутатса парас ĕç пирĕн идеологилле ĕçре чи юлса пыракан участок пулать пулĕ.

Юлашки вăхăтчен пысăк парторганизацисен, сăмахран, Кавказ леш енчи тата Баку парторганизацийĕсен историне сутатакан кĕнекесем сарăлнăччĕ. Çав кĕнекесене питĕ паха кĕнекесем, вĕсем тăрăх вĕренмелле тесе те шутланă. Асăннă кĕнекесенче фактсене пăсса кăтартнă пулнă, хăшпĕр çынсене вырăнсăр, тĕрĕс мар хăпартса мухтанă, ыттисене пачах аса илмен; иккĕмĕш вырăнта тăракан событисене ытлашши çÿлти шая хăпартса кăтартнă, çав вăхăтрах пысăк ĕçсене пĕчĕклетсе кăтартнă, вĕсенче большевиксен партийĕн революцичченхи ленинла Центральнăй Комитечĕн ертсе пыракан тата çул кăтартса пыракан рольне чакарса сутатнă.

Пирĕн граждан вăрçи тапхăрне сутатакан марксистла кĕнекесем халĕ те çукха. Халиччен кăларнă кĕнекесенче пысăк çитменлĕхсем пур, вĕсем наука енчен усăллă мар, хăшпĕрисем вара сиен кÿме те пултараççĕ.

Уйрăм историксем 1918—1920 çулсенчи граждан вăрçи тапхăрĕнчи хăшпĕр кăткăс тата хирĕçÿллĕ событисем вăхăтран-вăхăта классен вăйĕсем хушшинчи çыхăнусем улшăннинчен мар, партин ун чухнехи хăшпĕр руководителĕсем, событисем пулнă хыççăн темиçе çул иртсен халăх тăшманĕсем тесе тĕрĕс мар хаклакансем, сăтăрла ĕçсем тунинчен килнĕ пек ăнлантарса пама пăхаççĕ. Мускаври пĕр история çавăн пек каласси патне çитнĕ: Украинăра парти руководителĕсем хушшинче Антонов-Овсеенко юлташ е Коснор юлташ пулман пулсан, тен, махновщина тата григорьевщина пулман пулĕччĕç, Петлюра уйрăм тапхăрсенче çитĕнÿсем тăвайман пулĕччĕ, коммунисем организацилес тĕлĕшпе йăнăшсем пулман пулĕччĕç (сăмах майĕн, вăл вăхăтра çавăн пек явлени Украинăра çеç мар, ытти çĕрте те пулнă), Украина вара тÿрех партипе çĕршыв экономикăлла çĕнĕ политикăна пурнăçлама тытăннă хыççăн йышăннă çул-йĕр çине тăнă пулĕччĕ, имĕш.

Историе çавăн пек пăтраштарса кăтартни марксистла историрен инçе тăрать. Ку вăл историри событисене ытларах идеалистла, эсерла ăнлантарнă пек туйăнать. Эпĕ çапла шутлатăп: Украина социализмла государстви çуралса аталаннин историне çырма хăтланнă Мускаври хăшпĕр историксем, тен, çав ĕçе пуçăнма та кирлĕ пулман, мĕншĕн тесен çав историе лайăхрах çырма пултаракан историксем Украинăрах тупăнĕç. (Залра кулаççĕ).

Пирĕн философсем çинчен те пĕр-ик сăмах калас пулать. Вĕсем хăйсемех çакна ăнланма тивĕçлĕ: вĕсен ĕçĕ те историксемпе экономистсен ĕçĕнчен чаплах мар, унтан та ытларах, вĕсем парти умĕнче тата пысăкрах парăма кĕнĕ.

Хамăрăн юристсем çинчен те калас тетĕп. Çакна палăртас пулать: Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче, Ленин пурăннă вăхăтра тата вăл вилнĕ хыççăнхи темиçе çул хушшинче советла юридически наука, законодательнăй тата процессуальнăй нормăсем хăвăртрах аталанчĕç, вĕсене марксизм-ленинизм идейисемпе, пирĕн парти программинче тĕрĕс палăртнă пролетарилле социализмла законлăхăн никĕсĕсемпе килĕштерсе çырнă.

Каярахри тапхăр пирки ун пек калама çук, ку вăл КПСС Центральнăй Комитетне чăннипех шиклентерчĕ. Центральнăй Комитет, ленинла социализмла законлăха пур майсемпе те çирĕплетессине шута илсе, çав çитменлĕхе вараха ямасăр пĕтермелле тесе йышăнчĕ. Ун çинчен Центральнăй Комитетăн отчетĕнче каланă.

Пирĕн çĕршыв экономикипе политика енчен калама çук пысăк çитĕнÿсем турĕ. Эпир экономикăна çĕнĕрен тата ытларах çĕклемелли программăна пăхса тухатпăр.

(Вĕçĕ 4-мĕш страницăра).

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН XX СЪЕЗЧĔ

А. И. Микоян юлташ сăмахĕ

(Вĕçĕ).

Пирĕн партире теори тĕлĕшĕнчен лайăх хатĕрленнĕ, марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене куç хупсах калама вĕреннĕ экономистсем, историксем, философсем, юристсем питĕ нумай кадрĕсем пур. Анчах вĕсем хăйсен пĕлĕвĕпе сахал пулăшаççĕ, пирĕн марксизм-ленинизм теорине аталантарас тĕлĕшпе тĕплĕн, творчествăлла ĕçлени туйăнмасть.

Пирĕн теоретиксенчен нумайăшĕ вăхăта кивĕ цитатăсене, формулăсене тата положенисене темиçе хут тата тĕрлĕ майпа калаçсах ирттерсе ярассĕ.

Творчествăсăр мĕнле наука пулма пултарать? Творчествăсăр школярство, шкулти упражненисем çеç пулма пултараççĕ, мĕншĕн тесен наука вăл пуринчен малтан творчество, çĕннине тупни, киввисене темиçе хут калани мар. (Алă çупаççĕ).

Наукăпа теори работникĕсем хăйсен пĕтĕм вăйне пирĕн пурнăçри çĕнĕ фактсене, ССР Союзĕнчи тата ытти çĕршывсенчи экономикăпа общество аталанăвĕнчи çĕнĕ событисемпе явленисене тĕпчесе вĕренме, çак фактсемпе явленисене марксизм-ленинизм çутипе çутатса пама, çапла вара марксизм-ленинизмăн идейăлла пуянлăхне малалла ӳстерме хăйсен пĕтĕм вăйне пама тивĕçлĕ.

Партин XX съезчĕ идеологилле работниксен ĕçне вăйлатма нумай пулăшĕ. Вĕсем творчествăлла ĕçе пикенсе пуçăнĕç. Кунта тумалли ĕçсем вĕçĕ-хĕрри те çук, халăха кирлĕ, йывăр, интереслĕ тата хисеплĕ ĕçсем питĕ нумай.

Идеологилле фронтра ĕçлекенсем çакна пĕлсе тăччăр: вĕсем пурнăçран тăрса юлнине парти чăтса тăма пултараймасть. Экономистсем, философсем, юристсем партипе, пирĕн пурнăçпа пĕр утăмпа утма, наукăлла ĕç юлса пынине пĕтерме, марксизм-ленинизма творчествăлла пуянлатса пыма тивĕçлĕ.

* * *

Юлташсем! Отчетлă доклад Центральнăй Комитет, Коммунистсен партийĕ, пĕтĕм совет халăхĕ партин XIX—XX съезчĕсем хушшинче пысăк ĕçсем туса ирттернине, коммунизм строительствин пысăк ĕçне тăвас тĕлĕшпе эпир тĕрĕс çул çинче тăнине уççăн кăтартать.

Коллективлăн ертсе пырасси çине, Коммунистсен партийĕн пĕрлĕхĕ çине таянса ĕçлесе, Центральнăй Комитет иртнĕ çулсенчи йăнăшсемпе çитменлĕхсене тăрăшыв çине кăларчĕ, вĕсене политикăлла, хуçалăхла, культурăлла строительствăн тата партин шалти строительствин мĕнпур участокĕсенче татăклăнах пĕтерессишĕн кĕрешрĕ. Пирĕн Центральнăй Комитетăн ĕçĕнчи ленинла чăн-чăн уйрăмлăхĕ çакăнта палăрса тăрать.

XX съезд пирĕн парти историйĕнче Ленин вилнĕ хыççăн чи пысăк вырăн йышăнса тăрать тесен,— çакă нихăçан ӳстерсе калани мар. Ленин шухăш-кăмăлĕсем, ленинизм пирĕн пĕтĕм ĕçре, пирĕн мĕнпур решенисенче палăрса тăраççĕ, Ленин пурăннă пекех, пирĕнпе пĕрле пулнă пекех туйăнать. (Нумайччен, тăвăллăн алă çупаççĕ).

Вилес умĕн Ленин пирĕн партипе революцин малашлăхĕ пирки канăçсăрланнине пурте пĕлеççĕ. Вăл нимрен ытларах парти пайланса каясран, рабочи класпа хресченсен союзĕ арканса каясран хăранă. Вăл ăна та, кăна та малтанах сирсе яма пулăшакан майсем тупма тăрăшнă. Вăл çакна ĕненсе тăнă: парти речĕсенче, унăн ертсе пыракан пайĕнче пĕрлĕх пулсан, рабочи класпа хресченсем хушшинче союз пулсан тата çав союза тĕреклетсе пырсан, коммунизм ĕçне никам та çĕнтереймест.

Пирĕн парти речĕсенче, унăн ертсе пыракан пайĕнче организацилле политика енчен мĕн тери çирĕп пĕрлĕх пуррине, марксизм-ленинизм идейисем мĕнле чечекленнине, рабочи класпа колхоз хресченĕсен союзĕ мĕн тери çирĕп те тĕреклĕ пулнине Ленин халĕ, 32 çул иртнĕ хыççăн, курас пулсан, мĕн тери савăннă пулĕччĕ тата вăл çакна курнă пулĕччĕ: эпир Ленин ячĕпе тупа тăватпăр çеç мар, эпир Ленин идейисене пĕтĕм вăйпа пурнăçлатпăр тата вăл кăтартса хăварнисене чыслăн пурнăçлатпăр. (Нумайччен, тăвăллăн алă çупаççĕ).

Пирĕн партин XX съезчĕ, унăн решенийĕсене, Центральнăй Комитетăн докладне парти, Совет çĕршывĕнчи тата ытти çĕршывсенчи пирĕн туссем хĕрӳллĕн кĕтсе илеççĕ. Пирĕн партипе çĕршыв умĕнче тăракан çĕнĕ пысăкран та пысăк задачăсем пурнăçланĕç. Ун пирки нимĕн чухлĕ те иккĕленмелли çук, пирĕн туссем те çапла шанса тăраççĕ, пирĕн тăшмансем те хăйсем иккĕленессине пăрахчăр.

Эпир малалла каяссин, коммунизм тăвассин ăнăçлăхĕ пуринчен ытларах, çакăнта пулать тесе каланă пирĕн ĕмĕрĕмĕр вилĕмсĕр çулпуçăмăр тата учителĕмĕр Ленин: «Эпир тĕнчери чи тĕлĕнмелле вăй çине—рабочисемпе хресченсен вăйĕ çине таянса ĕçлетпĕр». (Нумайччен, тăвăллăн алă çупаççĕ).

ССР Союзĕн Оборона Министрĕн ПРИКАЗĔ

1956 çулхи февралĕн 23-мĕшĕ. № 15. Мускав хули.

Юлташсем—салтаксемпе матроссем, сержантсемпе старшинасем!

Юлташсем—офицерсем, генералсемпе адмиралсем!

Паян совет халăхĕпе унăн воинĕсем Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем 38 çул тултарнине паллă тăваççĕ.

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флотĕн кунне кăçал пирĕн çĕршывăн пурнăçĕнчи чаплă событи—Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XX съезчĕ ячĕпе пĕтĕм халăхăн политикăлла активлăхĕпе ĕçри хастарлăхĕ ӳснĕ условисенче уявлаççĕ. Хăйсен тăван Коммунистсен партийĕпе унăн ленинла Центральнăй Комитечĕ таврă тачă пĕтĕçнĕ совет çыннисем парти палăртнă аслă программăна пурнăçа кĕртес çирĕп шухăш-кăмăлпа пурăнаççĕ.

Мирлĕ, пултаруллă ĕçпе пурăнакан Совет Союзĕнчи халăхсем çирĕп те нумая пыракан миршĕн чунтан-чĕререн тăрăшаççĕ. Государствăсем хушшинче пĕр-пĕрне шанса тăмалла тăвас тĕллевпе Совет Правительстви чылай ĕçсене пурнăçларĕ. ССР Союзĕн тулашри политикине пурнăçланине пула тата мире юратакан мĕнпур халăхсем тăрăшнине пула тĕнчери лару-тăрури йывăрлăха паллă таран çăмăллатнă.

Анчах та империализмла çĕршывсенчи агрессилле ушкăнсем халăхсен шухăш-ирĕкĕпе интересĕсене шута илесшĕн мар. Вĕсем мир ĕçĕшĕн хăрушă, «вăйпа хăратмалли» политикăна çине тăрса малалла тытса пыраççĕ, агрессилле çар блокĕсем тăваççĕ тата вĕсене сарса пыраççĕ, васкаса хĕçпăшалланассине вăйлатаççĕ. Çакă вăл пире агрессилле вăйсен ирсĕр ĕçĕсене сыхă асăрхаса тăма тата Советлă Тăван çĕршывăн оборона пултарулăхне ывăнма пĕлмесĕр тĕреклетме хушать.

Çарăн, Авиаципе Флотăн воинĕсем хăйсен çар ăсталăхне лайăхлатас ĕçре çĕнĕ утăм тумалла, кучухнехи боевой техникăпа хĕçпăшала çине тăрса вĕренсе алла илмелле, дисциплинăна пăрĕ çирĕп пăхăнмалла, сыхăлăха тата çапăçăва хатĕр тăрассине пĕрмай ӳстерсе пымалла.

Салтаксене, матроссене, сержантсене, старшинасене, офицерсене, генералсемпе адмиралсене Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флотĕн кунĕ ячĕпе саламласа сывлăх сунатăп тата çар ĕçĕпе политикăн вĕренес ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума ырă сунатăп.

Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем 38 çул тултарнă ятпа çапла приказ паратăп:

Паян, февралĕн 23-мĕшĕнче, пирĕн Тăван çĕршыв столицинче—Мускавра, союзлă республикăсен столицисенче, çавăн пекех герой-хуласенче: Ленинградра, Сталинградра, Севастопольре тата Одессăра тупăсенчен çирĕм хут пĕр харăс персе салют памалла.

Сывă пултăр пирĕн хăватлă Советлă Тăван çĕршыв!

Сывă пулччăр паттăр совет халăхĕпе унăн мухтавлă Хĕçпăшаллă Вăйĕсем!

Сывă пултăр пирĕн тăван Совет Правительстви!

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийе—пирĕн мĕнпур çĕнтерӳсене организацилекенĕпе хавхалантаракане мухтав!

ССР Союзĕн Оборона Министрĕ

Совет Союзĕн Маршалĕ Г. ЖУКОВ.

ДОСААФ активисчĕсене наградăлаççĕ

Совет Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ 38 çул тултарнине паллă тунă май, ДОСААФ-ăн республикăри комитечĕ Канашри ялхуçалăх механизаци училищинчи ДОСААФ пуçламăш организацине, Вăрнарта вăтам шкулти ДОСААФ пуçламăш организаци председательне А. С. Эхрин юлташа, Шупашкарти пир-авăр техникумĕнчи ДОСААФ пуçламăш организаци председательне А. И. Голынин юлташа, Канашри ялхуçалăх механизаци училищинчи ДОСААФ пуçламăш организаци председательне Н. И. Морозкин юлташа, Чăвашсен ялхуçалăх институтĕнчи обществăлла инструктора М. Г. Кошкин юлташа оборона пĕлĕвĕсене халăх хушшине сарас енĕпе лайăх ĕçленĕшĕн «Активлă ĕçленĕшĕн» значокпа наградăлама тăратнă.

ДОСААФ-ăн республикăри комитечĕ педагогика институтĕнчи обществăлла инструкторсене Брагинпа Храпальный юлташсене, электромеханика техникумĕнчи обществăлла инструктора Кузнецов юлташа тата ыттисене те грамотăсем парса наградăланă.

СОВЕТ ÇАРĔН КУНĔ ЯЧĔПЕ ОРГАНИЗАЦИЛЕНĔ ВЫСТАВКА

Совет çĕршывĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем 38 çул тултарнă ятпа Республикăн Шупашкарти Максим Горький ячĕпе тăракан библиотекинче кĕнекесен выставки организациленĕ. Выставка экспоначĕсем хушшинче марксизм-ленинизм классикĕсен Совет Çарĕ çинчен çырнă кĕнекисем, илемлĕ литература произведенийĕсем пур. Унта А. Твардовскин «Василий Теркин» поэмине, чăваш халăх поэчĕ С. В. Эльгер çырнă «Вунсаккăрмĕш çул» поэмăна, В. Садайăн «Летчиксем» романне т. ыт. те курма пулать.

Республикăри колхозсем 1956 çулхи февраль уйăхĕн иккĕмĕш вунăкунлăхĕнче кашни ĕнерен мĕн чухлĕ сĕт суса илнине КĂТАРТНИ

	(Литрпа)		(Литрпа)
Çĕрпӳ	30,1	Калинино	23,6
Вăрнар	28,2	Чурачăк	23,1
Улатăр	27,9	Шăмăршă	23,0
Чкаловски	25,8	Советски	22,6
Муркаш	24,4	Хĕрлĕ Чутай	22,3
Етĕрне	23,8	Ишлей	21,3
Елчĕк	22,7	Элĕк	21,0
Комсомольски	26,7	Сĕнтĕр	20,9
Çĕмĕрле	28,7	Октябрьски	20,8
Шупашкар	28,3	Канаш	20,6
Первомайски	27,3	Пăрачкав	20,5
Красноармейски	26,4	Вăрмар	20,4
Куванкино	26,1	Тăвай	19,2
Йĕпреç	25,0	Куславкка	17,6
Шăхасан	23,7	Сĕнтĕрвăрри	17,1

* * *

Республикăри хăшпĕр районсенчи колхозсенче ĕнесенчен сĕт суса илесси февралĕн иккĕмĕш вунăкунлăхĕнче чăштах ӳкрĕ пулин те, нумай районсенче ăнăçлă ушăну та пулнарĕ. Малта выракан районсенче (Çĕрпӳ, Вăрнар, Улатăр) кашни ĕнерен 28—30-шар литр сĕт илеççĕ пулсан, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка тата Тăвай районĕсенче 17—18-шар литр çеç илнĕ. Çитменнине Сĕнтĕрвăрри районĕ февралĕн малтанхи вунăкунлăхĕнчи пулнинчен те сахалтарах суса илнĕ, республикăра чи кайри вырăна тăрса юлнă.

Вăйăт çур еннелле сулăннă май халĕ ĕнесен сĕт хушса пама пуçларĕç. Вĕсене лайăх пăхса апатлантарни кăна кирлĕ. Анчах хăшпĕр сĕрте çавăн çинчен манаççĕ, ытлăх апачĕ çитменнине пулăн те унпа йĕркеллĕ усă курмаççĕ. Çавна пула те ытти хăшпĕр районсен (Сĕнтĕр, Канаш, Пăрачкав, Вăрнар) ĕнесенчен сĕт суса илес тĕлĕшпе пĕр вырăнтах тăраççĕ. Вĕсен февралĕн иккĕмĕш вунăкунлăхĕнче те ӳсĕм тăваймарĕç.

Районсенчи пурçине совет органĕсен, колхоз председателĕсемпе пуçламăш парторганизаци секретарĕсен ĕнесенчен сĕт суса илес ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе мĕн кирлине пурне те тăвас пулать. Чи малтанах сĕтеклĕ апатсемпе тĕрĕс усă курма тăрăшас пулать. Ĕçе чăннипе тытăнсан, ĕнесенчен сĕт суса илессине кашни колхозрах—кая юлнисенче те, малта пыракансенче те—çитес кунсенчех кальхинчен икĕ хут ытларах ӳстерме май пур. Кашни ĕнерен 40 килограмма яла сĕт суса илмелли—çакна пултăр февралĕн виççĕмĕш вунăкунлăхĕнче донркăсем умне лартнă задача. Çав задачăна пурнăçлама ĕне фермисенче ĕçлекенсене пурне те мобилизациле.

Советлă Тăван çĕршывăн шанчăклă хуралĕ

Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем 38 çул тултарнине эпир КПСС XX съезчĕ ĕçленĕ кунсенче, совет халăхĕн ĕçри хастарлăхĕ нихçанхинчен те ытларах ӳснĕ кунсенче паллă тăватпăр.

Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене Октябрьти Социализмла Аслă революци çуратнă. Коммунистсен партийĕ, аслă Ленин вĕсене социализмлă Тăван çĕршыва хӳтĕлеме организациленĕ. Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем 38 çул хушшинче, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, кĕрешӳсен мухтавлă çулне утса тухрĕç. Интервенципе граждан вăрçи çулĕсенче вĕсем паттăррăн кĕрешрĕç, империализмла 14 государствăн тата буржуалла-помещикла контрреволюцин çарĕсене çĕмĕрсе тăкрĕç, Аслă Октябрĕн çĕнтерĕвĕсене тата çамрăк Совет республикин никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварчĕç.

Граждан вăрçи эпир çĕнтернипе вĕçленнĕ хыççăн совет халăхĕ, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, вăрçă ишĕлтернĕ хуçалăха юсама, социализм тума тытăнчĕ.

Вăрçă умĕнхи пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче пирĕн çĕршыв индустриллĕ-колхозлă социализмлă хăватлă держава пулса тăчĕ. Экономика ӳсни тата техника прогресĕ вăйланни пирĕн Хĕçпăшаллă Вăйсене чи хăватлă хĕçпăшалпа пуянлатма май пачĕç. Çарсен кĕрешӳри пултарулăхĕ тата политикăлла хатĕрленĕвĕ султан-сул лайăхланса пычĕ, çĕнĕ, пысăк квалификациллĕ командирсем ӳссе çитĕнчĕç, боецсене политика, çар тата культура тĕлĕшĕнчен воспитани памалли çĕнĕ система туса хунă. Çарти парторганизацисем çирĕпленчĕç тата идея тĕлĕшĕнчен пиçĕхрĕç.

1941—1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçăра пирĕн Хĕçпăшаллă Вăйсем хăйсен никам çĕнтерейми вăй-хăватне кăтартса пачĕç. Коммунистсен партийĕ хавхалантаракан, пĕтĕм совет халăхĕ пулăшса тăракан Совет Çарĕ фашистла захватчиксене хирĕç пынă вăрçăн тĕп йывăрлăхне хăй тӳссе ирттерчĕ. Вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче фашистла çарсен вăйпе хавшатса тата гитлеровецсене Мускав патĕнче çĕмĕрсе тăкса, Совет Çарĕ Сталинградпа Курск патĕнче историлле çапăçусем турĕ. Çав тапхăртан пуçласа вăрçăра пĕтĕм пуçарулăх Совет Çарĕ аллине куçрĕ, вăл çĕнтерӳллĕ наступлени пуçларĕ. 1944 çулта Совет Çарĕ хаяр тăшмана пуринче хутчен хăватлăн пырса çапрĕ, çавна пула совет çĕрне фашистла оккупантсенчен ирĕке кăларчĕ. ССР Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем вăрçă ĕçĕсене Совет Союзĕн чиккисенчен леш енне илсе тухрĕç. 1945 çулта, Хĕвелтухăç Пруссире, Висляпа Одер çинче, Будапештпа Вена патĕнче чаплă операцисем ирттернĕ хыççăн, Совет Çарĕ Берлина çĕнсе илчĕ, гитлерла Германие пĕтĕмпех аркатса тăкрĕ, пĕр сăмахсăрах парăнтарчĕ.

Фашистла Германи поражени тӳснĕ хыççăн 4 уйăх иртсен, Совет Çарĕ империализмла Японин çарĕн тĕп ушкăнне—Квантун çарне—пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкрĕ. Çакă вара тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вĕçленессине хăвăртлатрĕ.

Фашизм вăйĕсене хирĕç пынă çапăçура Совет Çарĕпе халăх демократи çĕршывĕсенче тин кăна çуралса тухакан çарсем хушшинчи туслăх аталанса тата çирĕпленсе пычĕ. Пирĕн Хĕçпăшаллă Вăйсенин юнашар тăрса, Польшăпа Чехословаки çарĕсем те гитлерла çарсене ăнăçлăн çĕмĕрсе пычĕç. Хăйсен тăван çĕршывне ирĕке кăларассишĕн пынă кĕрешӳре Югославин воинĕсем тата халăхĕ питех те пысăк тӳсĕмлĕх кăтартрĕç. Вăрçăн юлашки тапхăрĕнче Болгарипе Румынин дивизийĕсем те хĕçпăшаллă кĕрешӳве хутшăнчĕç.

США-па Англин хĕçпăшаллă вăйĕсем те Германи фашизмне хирĕç кĕрешме пирĕнпе пĕрле хутшăнчĕç. Çавăн пекех эпир фашистла захватчиксене хирĕç паттăррăн кĕрешнĕ партизансен нумай шутлă отрячĕсене те чĕререн тав туса аса илме тивĕçлĕ.

Прогрессивлă обществăлла строй çар наукине çар организацине те лайăхрах туса хума май парать тесе Ленин вĕрентни тĕрĕс пулнине Аслă Отечественнăй вăрçă çĕнĕрен çирĕплетсе пачĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче совет çар искусстви пĕрмаях аталанса тата лайăхланса пычĕ. И. В. Сталин ертсе пынă Верховнăй Главнокомандовани пирĕн çарсен кĕрешĕвне ăста ертсе пычĕ. Пирĕн Хĕçпăшаллă вăйĕсен Аслă Отечественнăй вăрçăри операцийĕсем питех те пысăк пулнине, тарăн та хăюллă шухăшлă пулнине палăрса тăчĕç.

Вĕсенче мĕнпур йышши çарсем пĕр-пĕрипе лайăх сыхăнса тăрса çапăçнин чаплă тĕслĕхне, совет çар искусстви буржуалла çарсенчи çар искусствинчен нумай малта тăнине кăтартса панă.

Пирĕн халăх Аслă Отечественнăй вăрçăра çĕнтерни историлле питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хаяр кĕрешӳре совет çыннисем тĕнчери пĕрремĕш социализмлă государствăн ирĕклĕхĕне никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварчĕç. Вĕсем Европăри халăхсене ирĕке кăларчĕç, пĕтĕм тĕнчери халăхсене фашизм чуралантарас хăрушлăхран çăлса хăварчĕç. Империализм малалла вăйсăрланчĕ. Европăпа Азири чылай çĕршывсем империализм системинчен тухса ӳкрĕç, вĕсенче халăх демократи стройĕ çирĕпленчĕ.

Китайра халăх революцийĕ çĕнтерни тата аслă державăна—Китай Халăх Республикине туса хуни социализмпа демократин питех те пысăк çĕнтерĕвĕ пулса тăрать.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче совет халăхĕ, вăрçă кӳнĕ суранесене хăвăрт юсаса тата социализмла хуçалăха малалла аталантарса, коммунизм строительствине ăнăçлăн пурнăçласа пырать.

Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана тултарнă май çĕршывăн экономикăлла вăй-хăвачĕ ӳсрĕ, хуçалăхăн социализмла системи тата ытларах çирĕпленчĕ, совет халăхĕн материальнăй пурнăçĕ лайăхланчĕ, культури ӳсрĕ, ССР Союзĕ ытти çĕршывсемпе экономикăлла çыхăну тытасси анлăланчĕ, Совет Союзĕн тата пĕтĕм социализм лагерĕн тĕнчери лару-тăрăвĕ çирĕпленчĕ.

Улттăмĕш пилĕк çуллăх план пĕтĕм совет халăхĕн питех те пысăк программи пулса тăрать. Çав плана пурнăçа кĕртсен, ССР Союзĕн экономикăлла вăй-хăвачĕ тата оборона тĕлĕшĕнчи хăвачĕ малалла çирĕпленĕ, халăхăн пурнăçĕ нумай лайăхланĕ, совет культури ӳсĕ.

Улттăмĕш пилĕкçуллăхăн задачисенче совет халăхĕ пирĕн Тăван çĕршывăн вăй-хăвачĕн чаплă ӳсĕмне, социализм системи капитализм системинчен малта тăнине уççăн курса тăрать.

Совет государстви мирлĕ политика тытса пырать. Çав политика тĕрлĕ обществăлла системăллă государствăсем мирлĕн килĕштерсе ĕçлемелли ленинла принципрен тухса тăрать.

Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет правительствин тулашри тĕрĕс политикине пула юлашки икĕ çул хушшинче Совет Союзĕн тĕнчери лару-тăрăвĕ тата ытларах çирĕпленчĕ.

Совет государстви руководителĕсем Н. С. Хрущевпа Н. А. Булганин Индие, Бирмăна тата Афганистана кайса килни ССР Союзĕ мирлĕ политика тытса пынине тепĕр хут уççăн кăтартса парать. Вĕсем унта кайса килни тĕрлĕ социальнăй-политикăлла системăллă государствăсен мирлĕ ĕçлесе пурăнма пултарни çинчен калакан ленинла принцип тĕрĕс пулнине çĕнĕрен кăтартса пачĕ, Азири халăхсем хушшинче пирĕн Тăван çĕршывăн авторитетне вăйлатма пулăшрĕ.

ССР Союзĕн мире upратакан тулашри политикине хирĕç пырса, США-ри агрессилле ушкăнсем, Совет Союзĕпе мирлĕн ăмăртассинчен хăраса, пире экономика тĕлĕшĕнчен малалла ӳсме чăрмантарас тесе, хăйсен хĕçпăшаллă вăйĕсене ӳстерме чаранмаççĕ, çар расходĕсем валли укçа-тенкĕ ытларах уйăрса параççĕ; вĕсем «вăйпа хăратмалли» пайкуçа тунă хăйсен политикине тытса, «сивĕ вăрçа» малалла тăсса пыраççĕ.

Çав тĕллевпех США социализм лагерьне хирĕçле тунă агрессилле блоксене—Çурçĕр Атлантика союзне, Багдадри пакта, Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири çар блокне çирĕплетме тăрăшать; Хĕвеланăç Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене пысăклатма васкать.

Хĕвеланăçĕнчи державăсен агрессилле политики мирлĕ пурнăçа хăрушлăх кӳрет. Çав державăсем Европăра хăрушсăрлăх туса хурас тĕлĕшпе социализм лагерĕнчи çĕршывсене коллективлă килĕшӳсем тума килĕшмесçĕ. Çавăн пирки ĕнтĕ Европăри мире сыхлама социализм лагерĕнчи çĕршывсен хăйсен вăйĕсене пĕрлештермелле тата хăйсен оборона тĕлĕшĕнчи хăватне ӳстермелле пулса тухрĕ. Çак тĕллевпе 1955 çулхи майăн 14-мĕшĕнче Варшавăра Албани Халăх Республики, Болгари Халăх Республики, Венгри Халăх Республики, Демократиллĕ Германи Республики, Польша Халăх Республики, Румыни Халăх Республики, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ тата Чехословаки Республики туслă пулассин, пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçлесси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен Договор турĕç.

Договора хутшăннă государствăсем Европăра коллективлă хăрушсăрлăх туса хума тăрăшни çинчен пĕлтерчĕç, тавлашуллă ыйтусене мирлĕ майпа татса пама, экономикăпа культура енĕпе килĕштерсе ĕçлеме обязательство илчĕç. Хĕвеланăç Германие ремилитаризацилени тата ăна агрессилле Çурçĕр Атлантика блокне хутшăнтарнине пула кисе тухнă лару-тăрăва шута илсе, социализм лагерĕнчи çĕршывсем, хăйсен хăрушсăрлăхне çирĕплетес тесе, хăйсен хĕçпăшаллă вăйĕсене пĕрлештерме тата пĕрлехи çар командованине туса хума йышăннă.

Варшавăри договор тăрăх туса хунă Политикăлла Консультативлă Комитет 1956 çулхи январĕн 28-мĕшĕнче Прагăра йышăннă Декларацире социализм лагерĕнчи çĕршывсем миршĕн тăнине тепĕр хут çирĕплетсе пачĕ.

Политикăлла Консультативлă Комитет тĕнчери йывăрлăха çăмăллатас тĕлĕшпе чылай сĕнӳсем пачĕ. Çавăнпа пĕрлех, империализм лагерĕ агрессилле тĕллевсем тытнине шута илсе, комитет социализм лагерĕн оборона тĕлĕшĕнчи хăватне вăйлатмалли чылай мерăсем йышăнчĕ: пĕрлешӳллĕ командовани çинчен положени çирĕплетрĕ; Варшавăри договора хутшăннă государствăсен пĕрлештернĕ хĕçпăшаллă вăйĕсен организацилле ыйтăвĕсене татса пачĕ; Демократиллĕ Германи Республикин нациллĕ халăх çарне туса хунă хыççăн унăн хĕçпăшаллă контингенчĕсене пĕрлештернĕ хĕçпăшаллă вăйсен шутне кĕртесси çинчен Демократиллĕ Германи Республики панă сĕнĕве йышăнчĕ.

Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсен задачи çакăн пек: кирек мĕн пуласран яланах хатĕр тăрса, совет халăхĕн хастарлă ĕçне шанчăклăн хӳтĕлемелле, çарпа флотра мĕнпур воинсен пултарулăхне пĕрмаях ӳстерсе пымалла, техникăпа лайăх хĕçпăшалланнă вăйлă тăшмана хирĕç кĕрешмелли çĕнĕ хатĕрсене тата кĕрешӳ мелĕсене çине тăрсах вĕренмелле.

Çарсенче халĕ çĕнĕ хĕçпăшал, çав шутрах массăллăн пĕтерекен хĕçпăшал та пур, мĕнпур йышши çар техники хăвăрт аталанса пырать, çакă çарсен организацине тата вăрçă ĕçĕсен меслетне улăштарма хушать. Çаксем пурте Совет Çарĕпе Флочĕн мĕнпур личнăй составне, пуринчен малтан генералсене, адмиралсене тата офицерсене Аслă Отечественнăй вăрçăн питех те пуян опытне тата çар наукин юлашки çитĕнĕвĕсене вĕренме, çавна май боевой задачăсене татса памалли çĕнĕ майсене тупма тата вĕсене вĕренсе çитме, вăрçăра тĕрлĕ йышши хĕçпăшалпа тата техникăпа лайăхрах усă курма хушать.

Офицерсен, генералсен тата адмиралсен ĕçĕнче малалла çитĕнӳсем тумалли пахарăн та паха услови вăл вĕсем хăйсен практикăлла ĕçĕнче марксизм-ленинизм теорийĕпе пĕлсе усă курни пулать. Командирсен, политоргансен, парти тата комсомол организацийĕсен çарпа флотăн личнăй составне присягăна тата çарти тивĕçе паттăррăн пурнăçлама воспитани памалла.

В. И. Ленин çапла вĕрентнĕ: кирек мĕнле вăрçăра та çĕнтерӳ тăвасси çарсен мораль тĕлĕшĕнчен çирĕп пулнинчен килет. Кучухнехи вăрçăра çапăçу мĕнле вĕçленессине çĕнĕ техникăна лайăх вĕренсе алла илнĕ çынсем татса параççĕ. Пĕтĕм личнăй состава малашне те моральне паттăрлăх тĕлĕшпе çирĕп пулма—дисциплинăллă, тӳсĕмлĕ, чăтăмлă, паттăр, пуçаруллă пулма тата хăйĕн ĕçĕсемшĕн ответлăха туйса тăма воспитани памалла.

Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем вăтăр сакăр çул хушши ĕнтĕ Октябрьти аслă çĕнтерӳсен хуралĕнче тăраççĕ. Хăйсен мĕнпур çĕнтерĕвĕсене вĕсем Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ăслăн ертсе пынипе тунă. Совет Союзĕ—мирпе халăхсен хăрушсăрлăхĕн çирĕпрен те çирĕп тĕрекĕ пулса тăрать. Унăн оборона тĕлĕшĕнчи вăй-хăватне çирĕплетес тесе Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ. Коммунизм обществи тăвакан пирĕн халăх хăйĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем социализмлă Тăван çĕршывăн государство интересĕсене хӳтĕлемелли тивĕçе чыслăн пурнăçа кĕртесси çирĕппĕн шанса тăма пултарать.

ШУПАШКАРТИ ЙĔЛТĔРÇĔСЕН ĂМĂРТĂВĔ

Çак кунсенче йĕлтĕр спорчĕ енĕпе Шупашкарта мала тухмалли ăмăрту пулса иртрĕ. Ăмăртăва вырăнсенчи физкультура коллективĕсенчен 288 çын хутшăнчĕ.

Уйрăм йĕлтĕрçĕсене илсен, хĕрарăмсем хушшинче 3 километр чупас енĕпе Семенова (Атăл леш енчи электростанцирен), 5 километр чупас енĕпе—Сымова (педагогика институтĕнчен) мала тухрĕç. Арçынсене илсен, Михайлов (учительсен сурттĕнчен) 10 километр хушшине, Назаров (ялхуçалăх институтĕнчен) — 15 тата 30 километр хушшисене пуринчен те хăвăрт чупса тухрĕç.

Производство коллективĕсенчи йĕлтĕрçĕсен командисене илсен, «30 лет ЧАССР» клуб сумĕнчи йĕлтĕрçĕсен команди, институтсемпе техникумсем енĕпе — ялхуçалăх институчĕпе электромеханически техникум командисем мала тухрĕç.

Ăмăртăва хутшăннă 44 йĕлтĕрçĕ спорт разрячĕн нормисене тултарнă.

Мала тухнă командăсене физкультурăпа спортăн хулари комитечĕн кусен сӳрекен парнисене тата грамотăсем панă.

19 çул конюхра

Муркаш районĕнчи «Знамя коммунизма» колхозри йĕрремĕш бригадăри С. Емельянов колхозник 19 çул хушши конюх пулса ĕçлет. Вăл вунă çулта—1945—1955 çулсем хушшинче хăй пăхакан кĕвĕресенчен 71 тиха пăхса ӳстернĕ.

Редактор М. Н. ЯКИМОВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ февралĕн 23-мĕшĕнче чăвашла спектакль «Асран кайми кунсем», февралĕн 24-мĕшĕнче чăвашла спектакль «Кай, кай Ивана». Спектакльсем 19 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

КИНО

РОДИНА — февралĕн 23-мĕшĕнче пур сеанссенче те çĕнĕ хроникăлла-документлă фильм «Дружба великих народов».

Концертсем ирттерекен залра 22 сехет те 30 минутра кино-комеди «Нестерка».

Хулари тата республикăри экрансем çинче

çĕнĕ илемлĕ фильм

„МАТЬ“

кăтартма тытăнаççĕ.

Сценари авторĕсем Н. Коварский, М. Донской.
Режиссер-постановщикĕ Марк Донской.
Композиторĕ Л. Шварц.

РОЛЬСЕНЕ ÇАКСЕМ ВЫЛЯÇÇĔ:

В. Марецкая (Ниловна), А. Баталов (Павел Власов), А. Петров, П. Усовниченко, С. Курилов, Т. Пилецкая, Л. Гриценко т. ыт. те.

Художествăлла фильмсен Киеври киностудийĕ 1955 çулта кăларнă.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 8. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—6-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—7-32, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, [illegible] пайĕ—3-86, [illegible] пайĕ—6-31, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-07, культура пайĕ—3-04, совет строительстви пайĕ—3-04, литературăпа искусство пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—3-52, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00051 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 573. Тираж 37.000 экз.